чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТКУН
2014, ноябрь / чӳк
22

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче “Коммунизм ялавĕ” /халĕ “Хыпар”/ хаçата “ХИСЕП ПАЛЛИ” орденпа наградăланă

226-227 /26632-26633/ №№ Хакĕ ирĕклĕ www.hypar.ru

Хăрушсăрлăх 4
Асăрханăр: пăр çӳхе!

02 служба 9
Пирĕн класра хăнара – полицейскисем

Çыхăнусем 14
Чăваш Ен студенчĕсем китайла вĕренеççĕ

ФОРУМ

# Санкцисем ура хӳраймĕç

***Ноябрĕн 17-18-мĕшĕсенче Мускавра Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн иккĕмĕш форумĕ ĕçлени çинчен «Хыпар» хаçат пĕлтернĕччĕ. Унта общество активисчĕсем пĕлтĕрхи тата кăçалхи экономикăпа промышленноç аталанăвне, социаллă пурнăçăн тĕрлĕ пулăмне тишкернĕ, Владимир Путин Президентăн май уйăхĕнчи указĕсене пурнăçлама мĕнле сăлтавсем чăрмантарнине сӳтсе явнă, çĕршывăн санкцисен тапхăрĕнчи аталанăвĕн çул-йĕрне палăртнă.***



*Раççей Президенчĕн В.В.Путинăн Чăваш Енри шаннă çыннисем Валерий Туркайпа Геннадий Матвеев çĕршыври паллă та сумлă çар ертӳçипе, çар генералĕпе Виктор Ермаковпа.*

Икĕ куна пынă форумăн ĕçне пин ытла çын – ОНФ ертӳçисем, Президентăн шаннă çыннисем, çĕршыв правительствин членĕсем, «Раççей тĕревĕ» тата «Ĕçлĕ Раççей» эксперчĕсем тата бизнес-пĕрлĕхсен представителĕсем хутшăннă. Чăваш Енри регион уйрăмĕн делегацийĕн йышĕнче – халăх фрончĕн уйрăмĕн çум председателĕ Николай Казаков, регионти ĕçтăвкомăн ертӳçи Николай Косыев, Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн шаннă çыннисем – Афганистан вăрçин ветеранĕсемпе инваличĕсен Пĕтĕм Раççейри общество организацийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертӳçи Николай Матвеев, Чăваш халăх поэчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ - тĕп редакторĕ Валерий Туркай тата Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Валентина Теллина.

Форумăн пĕрремĕш кунĕнче общество хастарĕсем 5 дискусси площадкинче кулленхи пурнăçăн пахалăхĕпе, социаллă тĕрĕслĕхĕпе, обществăпа влаç хушшинчи çыхăнупа, ял хуçалăх производствипе, ют çĕршывсенчен кӳрсе килекен апат-çимĕç продукцийĕсемпе промышленноç таварĕсене хамăрăннипе улăштарассипе çыхăннă çивĕч ыйтусене хускатнă. Сăмахран, «Общество тата влаç: тӳрĕ калаçу» площадкăри дискуссире федерацин тата регионсенчи ĕç тăвакан влаç тытăмĕсене япăх ĕçленĕшĕн самаях критикленĕ те. «Эпир Владимир Путин Президентăн май уйăхĕнчи указĕсенчен 23 проценчĕ кăна пурнăçланнă тесе йышăнтăмăр, çавăн чухлех – пурнăçланманнисен шутĕнче, ыттисем – çурма пурнăçланисем е ячĕшĕн пурнăçланисем. Çавăнпа та Халăх фрончĕ Президент указĕсене туллин тата пĕтĕмпех пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси хăйĕн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри пулнине çирĕплетрĕ», – тенĕ Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн ĕçтăвком ертӳçин заместителĕ Наталья Костенко.

➡ 2 стр.

Валери ТУРКАЙ

## Раççейĕме

Вăранать Мускав та,
вăранать Хусан та...
Шупашкар та уçрĕ
шуçăмпа куçне...
Эп сана, Раççейĕм,
ырă кун сунатăп!
Ăраскал çеç çутăр ӳлĕм сан çине!

Курасса, Раççей, эс
чăн та тем те куртăн.
Куртăн, тем те куртăн
хăв ĕмĕрӳнте.
Хăш чухне эс шухă тинĕс евĕр
пултăн,
Хăш чухне çутатрăн
тĕксĕм пĕлĕте.

Турăран писсессĕн
эс хăвна аркатрăн,
Хăв Çуртна çунтартăн
хăвăн аллупа...
Сурану, пĕлетĕп,
санăн питĕ тарăн.
Пурпĕр эс утатăн Аслă Çулупа!

Çăмăл мар пачах та халь
сана, Раççейĕм.
Анчах кам-ха йăтĕ
Санăн Хĕресне?
Шурă кăвакарчăн сансăр
епле вĕçĕ?
Кам çутатĕ сансăр
тĕксĕм тӳпене?..

Кунсерен, Раççейĕм,
вăйлăрах пулсамччĕ.
Çӳлти Турă савтăр яланах сана.
Ман çăлтăрăма эс çутăрах
тусамччĕ.
Чунăм ялан туйтăр санăн ăшшуна.

Вăранать Мускав та,
вăранать Хусан та...
Шупашкар та уçрĕ
шуçăмпа куçне...
Эп сана, Раççейĕм,
ырă кун сунатăп!
Эп ялан курасшăн эс телейлине!

***Мускав,***
***2014 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕ.***

## Налук службин хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

**Сире професси уявĕпе – Раççей Федерацийĕн налук органĕсен ĕçченĕн кунĕпе – ăшшăн саламлатăп.**

Налук служби – патшалăх тытăмĕн пĕлтерĕшлĕ единици. Асăннă служба пулăшнипе патшалăх бюджечĕ тытăнса тăрать тата пуянланса пырать. Çакă вара Чăваш Ене халăх пурнăçĕн шайĕпе пахалăхне ӳстермешкĕн тăнăç условисемпе тивĕçтерет тата малалла çирĕп утăмсемпе ăнтăлмашкăн май парать.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунатăп.

**В.Н.ИВАНОВ,**
**Федерацин налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕ çумĕнчи Общество канашĕн председателĕ, «АККОНД» АУО генеральнăй директорĕ.**

## Хисеплĕ Вулаканăмăр!

**Эс пĕлетĕн: «Хыпар» издательство çурчĕн» кун-çулĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Çĕнĕ самана пире çĕнĕлле пурăнма, çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Эпир сан шанчăкна тӳрре кăларма тăрăшăпăр, эс вара пирĕн кăларăмсене, тархасшăн, çырăнса.**

| Кăларăмсем | | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | | 54800 | 732,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăматкун | | 78353 | 304,08 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | | 54804 | 358,08 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | | 11515 | 325,08 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | | 11524 | 205,02 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт: хушма хуçалăх | | 54806 | 184,04 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | | 54838 | 376,62 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | | 43887 | 184,08 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | | 11529 | 319,08 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | | 24608 | 185,04 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | | 83429 | 140,36 | 120 | 120 | 100 |
| Тантăш | | 54802 | 274,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | | 73208 | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | | 73771 | 143,52 | 114 | 111 | 90 |

# Санкцисем ура хураймĕç

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Ытти площадкăра та çивĕч калаçу пынă. Вĕсем – «Раççей почти» хăйĕн пулăшăвĕн тарифĕсене вышкайсăр ÿстерсе янипе тата субсидии калăпăшне чакарнипе регионсенчи тата муниципалитетсенчи массăллă информаци хатĕрĕсен тăкакĕсене саплаштарма укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрасси, çĕршыври медицина ĕçченĕсен çивĕч ыйтăвĕсене татса парасси, бюджет тытăмĕнчи учрежденисенче вăй хуракансен шалăвне çÿллĕрех шая хăпартасси, экономика рецессийĕн паянхи тăрăмĕнчен тухасси тата ытти те. Çавăн пекех форумра АПШ тата ăна «пăхăнакан» ытти çĕршывăн Раççее хирĕç йышăннă санкцийĕсене пула лару-тăру уйрăмах çивĕчленнĕ май пĕтĕм вăйхăвата пĕрлештермеллине, унпа тухăçлă усă курмаллине палăртнă. Форумăн пленарлă канашлăвĕнче дискусси площадкисенче тунă резолюцисемпе çĕршыв Президентне паллаштарнă.

■ Юрий СТЕПАНОВ

# Китайпа алла-аллăн

***Ноябрĕн 20-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин федерацин Атăлçи округĕнчи тата Китайри Янцзы шывĕн Тури тата Вăтам юхăмĕсен регионĕсем суту-илÿпе экономика тата гуманитари енĕпе çыхăну тытас енĕпе ĕçлекен пĕрлехи ушкăнăн Раççей пайĕн видеоконференци мелĕпе йĕркеленĕ канашлăвне хутшăннă. Ăна РФ Президенчĕн округри полпречĕн заместителĕ Алексей Сухов ертсе пынă.***

Канашлура регионсем Китайри ĕçтешсемпе тытакан хутшăнусене аталантарас енĕпе пурнăçланă ĕçсемпе паллаштарнă. Иван Моторин хăйĕн докладĕнче çак ĕç планпа килĕшÿллĕн пынине палăртнă. Октябрĕн 13-мĕшĕнче Мускавра Раççей тата Китай Правительствисен пуçлăхĕсем тĕл пулнă май пĕрлехи «Чăваш Ен – Сычуань» агропарк» предприятие хутшăнакансем Чăваш Республикинче ял хуçалăх комплексĕ /агропарк/ йĕркелемелли пĕрремĕш тапхăра пурнăçласси çинчен калакан инвестици килĕшĕвне алă пуснă. Хальхи вăхăтра çак проект ĕçтешлĕхĕн малашлăхлă çул-йĕрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Унпа килĕшÿллĕн выльăхчĕрлĕх ĕрчетекен комплекс тумалли проекта пурнăçлас енĕпе ĕçлеççĕ.

Октябрь пуçламăшĕнче Сычуань провинцийĕн делегацийĕ пирĕн патра пулнă, уйăх вĕçĕнче Чăваш Ен делегацийĕ Чэнду хулине ĕçлĕ визитпа кайса килнĕ. Çав тĕлпулусенче Китайпа тытакан çыхăнусен çĕнĕ çул-йĕрĕсене палăртнă. Çитес кунсенче Китай представителĕсем агропаркпа çыхăннă пайăр ыйтусене сÿтсе явмашкăн республикăна килĕç.

Премьер-министр çавăн пекех республика РФ Промышленноçпа сутуилÿ министерствин «çуначĕ» айĕнче чылай ĕç пурнăçланине палăртнă. Раштавăн 2-мĕш çуррине çак министерство йĕркеленипе Китай делегацийĕ вăрмансемпе усă курас енĕпе пĕрле ĕçлессин ыйтăвĕсене сÿтсе явма килессе кĕтеççĕ. Гуманитари сферинчи çыхăнусем анлăланаççĕ. Ноябрьте Чăваш Енре Китайри провинцисен туризм тата вĕренÿ енĕпе ĕçлекен делегацийĕсем пулнă, пирĕн аслă вĕренÿ заведенийĕсемпе тивĕçлĕ килĕшÿсем тунă.

■ К.ВОЛКОВ

# Çĕнтерÿçĕсене чысласçĕ

***Ноябрĕн 22-мĕшĕнче 14 сехетре Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институтĕн ученăйĕсен канашĕн ларусен залĕнче /Шупашкар, Мускав проспекчĕ, 29, 1 корпус/ Махмуд Кашгарский ячĕллĕ Пĕтĕм тĕнчери калавсен 3-мĕш конкурсĕн /ăна Евроази Писательсен союзĕ ирттерет, штаб-хваттерĕ Турцире вырнаçнă/ чăваш тапхăрĕн çĕнтерÿçисене чысласçĕ. Кăçал конкурса 14 патшалăхпа халăх представителĕсем хутшăннă.***

Чăваш писателĕсем çак тупăшура пуçласа вăй виçнĕ. Конкурсăн чăваш тапхăрне паллă литературовед, филологи наукисен докторĕ, поэт тата писатель Виталий Родионов профессор ертсе пынă. Жюри йышĕнче – Борис Чиндыков писатель, ученăй, кĕнекесен авторĕ Надежда Иванова доцент, Николай Ларионов журналист /Патăрьел/, чăваш тата тĕрĕк наци юхăмĕсен хастарĕ Алексей Глухов /Тольятти, Самар/.

Конкурсăн чăваш тапхăрне Чăваш Енри, Тутарстанри тата Чĕмпĕр облаçĕнчи 7 писатель 8 калавпа хутшăннă. Çĕнтерÿçĕсен ятне Илле Иванов /Шупашкар/, Елена Мустаева /Чĕмпĕр/, Евгений Турхан /Хусан/ тивĕçнĕ.

Çĕнтерÿçĕсене чыслама Евроази Писательсен союзĕн делегацийĕ килет, унăн ертÿçи – доктор, писатель Якуп Омероглу доцент. Делегаци йышне çавăн пекех Турцин Хусанти генеральнăй консулĕ Тархан Дильмач, Турцири Эскишехир хулин кĕпĕрнаттăрĕ Азим Гюнгор Туна, унăн заместителĕ Нурлах Хаджи Калканчы, канцелярии ертÿçи Харун Йылдырым, «Эскишехир – Тĕрĕк тĕнчин культура тĕп хули-2013» агентство правленийĕн членĕ Ахмет Кот кĕнĕ. Асăннă хула чăвашсемшĕн ют мар. Унти университетсенче тĕрлĕ çулта чăваш студенчĕсем тÿлевсĕр вĕреннĕ, пирĕн ученăйĕсем, музыка, ташă, художество пултарулăхĕн ăстисем конференцисемпе фестивальсене хутшăннă. Турци хулин ертÿçисем тата генеральнăй консул Шупашкара пуçласа килеççĕ, Якуп Омероглу вара кунта пĕрре кăна мар пулнă, чăваш халăхĕн историйĕ, республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ тĕлĕшпе унăн публикаци те чылай.

■ Виталий РОДИОНОВ, профессор

ЛАРУ

# Парăмпа вăхăтра татăлмалла

***Ĕнер Правительство çуртĕнче ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн заместителĕ Олег Мешков ертсе пынипе ЧР Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Ăна Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, ЧР Правительство членĕсем, Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, хула-район администрацийĕсен пуçлăхĕсем, вĕсен тивĕçне пурнăçлакансем хутшăнчĕç.***

Кун йĕркинче – муниципалитет йĕркеленĕвĕсемпе коммуналлă комплекс предприятийĕсем çутçанталăк газĕпе усă курнăшăн парăмпа татăлас ыйту. Ку енĕпе йывăрланнă лару-тăрупа ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн заместителĕ – строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Олег Марков паллаштарчĕ.

– 2014 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне муниципалитет йĕркеленĕвĕсен, ăшăпа тивĕçтерекен организацисен парăмĕ çутçанталăк газĕпе усă курнăшăн 461 млн тенке çитнĕ, – пĕлтерчĕ вăл. – Куславккапа Вăрнар районĕсен – чи пысăкки: 17,8 тата 13,9 млн тенкĕ. Хуласенчен Шупашкарпа Çĕмĕрлене çитекен çук – 170 млн тата 108,9 млн тенкĕ.

«Шупашкар регионсен хушшинчи Газпром» ООО тÿлев самаях пухăннисем валли парăмпа татăлмалли график çирĕплетнĕ: тĕп хуламăр – «Коммуналлă технологисем» ОООпа, Çĕмĕрле – «Теплоэнерго» предприятипе.

Элĕк, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпÿ районĕсем, Улатăр хули октябрь уйăхĕнче парăма пĕтермелли тĕллеве пурнăçланă. Çав вăхăтрах Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле тата Етĕрне тăрăхĕсем графике пăхăнман.

Çĕмĕрлери «Теплоэнерго» МУП лару-тăрăва çивĕчлетнĕ. Парăма епле тÿлĕç? Хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Елена Туличева котельнăйсем кивелсе çитнине, пăрăхсене ăшă тытакан материалпа чĕркеменнине пĕлтернисĕр пуçне ыррине усăмлăн нимех те каламарĕ.

«Шупашкар регионсен хушшинчи Газпром» ООО гендиректорĕ Кияметдин Мифтахутдинов каланă тăрăх – муниципалитет йĕркеленĕвĕсемпе коммуналлă комплекс предприятийĕсен пĕлтĕр хутса ăшăтмалли сезон пуçламăшĕ тĕлне газ парăмĕ 238,6 млн тенкĕпе танлашнă, кăçал 350,3 млн тенке çитнĕ, вăл 46,8% пысăкланнă. Октябрь уйăхĕнче тата 187,1 млн тенкĕ хушăннă, 58,7 млн тенкине çеç тÿленĕ. Çапла вара ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне парăм 478,8 млн тенкĕ пухăннă /пĕлтĕр – 390,1 млн/. Пĕлтĕрхи май уйăхĕнчен пуçласа кăçалхи октябрьччен вырăна 118 график çитернĕ, анчах пĕри те пурнăçланман.

– Паянхи куна Патăрьел, Тăвай, Комсомольски, Муркаш, Шупашкар, Шăмăршă, Етĕрне тата Елчĕк районĕсен çеç ыйту татăлнă, – терĕ Кияметдин Садыртдинович.

Вăрнар район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш заместителĕ Вячеслав Горбунов, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри районĕсемпе Канаш хула администрацийĕсен пуçлăхĕсем Валентин Колумб, Владимир Григорьев тата Людмила Иванова хăйсен лару-тăрăвĕпе паллаштарчĕç, парăмсемпе пĕчĕккĕн те пулин татăлассине пĕлтерчĕç.

ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертÿçин тивĕçне вăхăтлăха пурнăçлакан Юрий Васильев, темиçе çул каялла Тăвай район администрацине ертсе пынăскер, паха опытпа паллаштарчĕ. Кашни çуртра газпа хутса ăшăтма тытăннине, котельнăйсене çĕнетнине аса илчĕ. Çавна пула газ тÿлевĕпе унччен парăмран тухайман район кĕçех тупăшлисен йышне кĕнĕ. Юрий Егорович хула-район администрацийĕсен представителĕсене Тăвайсен опычĕпе усă курма сĕнчĕ.

■ Валентин ГРИГОРЬЕВ

# Министр суд умне тăрать

Республика прокуратурин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – ЧР прокурорĕн пĕрремĕш çумĕ Чăваш Енĕн çутçанталăк ресурсĕсен министрĕ Иван Исаев тата министерствăн пай пуçлăхĕ Геннадий Мусабиров тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетнĕ.

Следстви версийĕпе килĕшÿллĕн 2011 çулта Мусабиров хатĕрленĕ тата Исаев çирĕплетнĕ документсене тĕпе хурса саккуна пăсса вăрман каснă. Патшалăха кÿнĕ сиен виçи – 280 млн яхăн тенкĕлĕх. Унсăр пуçне çав çулах министр хушăвĕпе «Чăваш вăрман хуçалăхĕ» ПУПăн 15 млн ытла тенкĕлĕх пурлăхне, çав шутра техникăна, складсене, гаражсене, вăрман питомникĕсен ытти пурлăхне туртса илнĕ, çакă предприяти хăйĕн ĕçне малалла тăсаймасси, вăл панкрута тухасси патне илсе çитернĕ.

Уголовлă ĕçе Шупашкарти Ленин районĕн судне тишкерме pană.

■ К.НИКОЛАЕВ

ÇАКЛАННĂ

# Оперативлă... вăрă

***Оперативлă пулмасăр! Вăл кĕске вăхăтрах темиçе преступлени тума ĕлкĕрнĕ вĕт!***

Пирвайхи хыпар Хĕрлĕ Чутай районĕн полицине райцентрти Çĕнĕ урамран килнĕ. Унта пурăнакан арçын каланă тăрăх – вăл хăйĕн грузовикне картишĕнче вăхăтлăха кăна лартса хăварнă. Тухнă та – салонти автомагнитолăн сенсор экранĕ çук иккен. Кÿршисем вăрра асăрхаса юлнă: палламан арçын, уксахлать...

Оперативлă следстви ушкăнĕ полици уйрăмне таврăнса та ĕлкĕреймен – тепĕр преступлени пирки хыпар çитнĕ. Такам УАЗ автомобиле, лавккасем тăрăх çăкăр турттаракансене, вăрласа кайнă иккен. Водитель лавккана кĕнĕ, двигателе хута ямалли çăра уççине машинăрах хăварнă. Вăрра вара çакă кăна кирлĕ...

Тата кăштахран «Форд» маршрут автобусĕн водителĕ шар курни палăрнă. Вăл та транспорт хатĕрĕн алăкне уçă хăварнă, ку тĕслĕхре те салонри автомагнитола çухалнă. Преступлени автовокзал территорийĕнчех пулнă та – кунти çынсем вăрă паллисене пĕлтернĕ.

Райцентрти полици нарядĕсем пурте çав çынна шырама тытăннă. Кĕçех уксахлакан пĕр арçынна тытса чарнă. Паллисем шыраври çыннăннипе пĕр килеççĕ. Элĕк районĕн çынни иккен – маларах та темиçе хут судпа айăпланнăскер, ниçта та ĕçлеменскер. Ухтарнă та – полицейскисем унăн кĕсийĕнче хайхи çухалнă «Сони» магнитолăна, «Шатл» автомагнитола экранне тупнă.

– Ун чухне çăкăр турттаракан УАЗа та вăлах вăрласа кайни пирки эпир пĕлменччĕ-ха, – тет вырăнти полици уйрăмĕн пуçлăхĕн çумĕ Василий Белов. – Тытса чарнăскер хăй каласа панă: хуçи çăра уççине машинăрах хăварнине асăрханă та – малалла çуран утас темен, руль умне кĕрсе ларнă. Автовокзал патне çитсен машинăна пăрахса хăварнă.

Тĕпчев пырать. 44 çулти арçын тунă преступленисен спискĕ çакăнпа кăна вĕçленет-и – следстви çак ыйтăва та хуравлĕ.

■ Инна СУРКОВА

# Авторсемпе пĕрле паллă турĕ

***Çак кунсенче Чăваш кĕнеке издательстви çуралнă кунне паллă турĕ – Чăваш Республикинчи чи ватă предприятисенчен пĕри 94 çул тултарчĕ. Издательствăна уявпа саламлама Е.Ф.Васильева, Н.Г.Иванова, Т.В.Артемьева, Е.Н.Жачева, Ю.М.Виноградов, Е.А.Мулюкова, Р.И.Гурьева, О.И.Печников, Г.А.Максимов, Н.П.Петров /Ишентей/, А.А.Тарасов, М.З.Захаров /Мерчен/ авторсем, И.В.Алексеев, Н.А.Васильева, С.А.Бритвина, З.И.Чернова художниксем килчĕç.***

Чăваш кĕнеке издательствин директорĕ Валерий Комиссаров предприяти ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, коллектива тата авторсене тухăçлă ĕçшĕн тав турĕ, пултарулăхра ăнăçусем сунчĕ. Авторсен хушшинче – паллă ăсчахсем, çыравçăсем, поэтсем, аслă шкулсен преподавателĕсем, вĕрентекенсем.

Издательствăн тĕп редакторĕ Валерий Алексеев хăнасене 2014 çулта кун çути курнă кĕнекесем çинчен каласа кăтартрĕ. Кусем – ăслăлăхпа ача-пăча литератури, А.Мĕтри Кипекĕн, Л.Таллеровăн, Д.Михлеевăн, Г.Максимовăн, А.Павловскаян, Улькка Эльменĕн илемлĕ хайлавĕсем, тăван тăрăх историйĕпе тата культурипе, чăваш, вырăс литературипе çырнă вĕренӳ пособийĕсем, ытти тĕрлĕ кăларăм.

**КИРЕК МĔНЛЕ РЕГИОН ИСТОРИЙĔ ТЕ ХĂЙНЕ ЕВĔРЛĔ. ХАМĂРĂН ИСТОРИ ТЫМАРĔСЕМПЕ ÇЫХĂНĂВА ÇУХАТМАЛЛА МАР. ПИРĔНПЕ ИСТОРИПЕ ЧУН-ЧĔРЕРЕН КĂСĂКЛАНАКАН ÇЫНСЕМ ÇЫХĂНУ ТЫТАÇÇĔ**

Издательство – кĕнеке кăларакан организаци çеç мар. Вăл – тăван тăрăх историйĕпе, тăван чĕлхепе, йăла-йĕркепе кăсăкланакан, харăсах темиçе проектпа ĕçлекен, пултаруллă çынсен пĕрлешĕвĕ. Кăçал «Чăваш Республикин Президенчĕн библиотеки», «Чăваш халăх пултарулăхĕ» ярăмсем пуянланчĕç. Арсений Тарасовăн, Геннадий Кирилловăн алçырăвĕсем пичетленсе тухрĕç. «Государственные символы Чувашской Республики: история создания, проекты, документы и материалы» кĕнеке, Геннадий Айхин çырнисен пуххин 3-мĕш томĕ кун çути курчĕç. Ухсай Яккăвĕн çырнисен пуххин 6-мĕш томĕпе, «И.Я.Яковлев в изобразительном искусстве» альбомпа паллашма пулать.

Часах Чăваш Республикин археологи карттин 2-мĕш томĕ, «Композиторы Чувашии» библиографи справочникĕ, Юрий Артемьевăн литературăпа тавра пĕлӳ статйисен пуххи, «Чуваши Присвияжья: история и культура» авторсен тĕпчевĕ пичетрен тухĕç.

Чи пархатарлă вулакансем, ачасем, патне Çĕнĕ çулчен чăвашла хайлавсем – Елен Нарпин /алçырусен конкурсĕн çĕнтерӳçи/ повеçĕ, Ара Мишшин, Аркадий Русаковăн тата ыттисен калавĕсем – çитĕç.

Чăваш кĕнеке издательствин ăнăçăвĕсем сотрудниксем профессии тĕлĕшĕнчен ăста пулнипе те çыхăннă, çавăн пекех авторсем, кĕнекесене хатĕрлекенсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Валерий Алексеев вĕренӳ пособийĕсен, тавра пĕлӳ тата ăслăлăх кĕнекисен уйрăм пĕлтерĕшне палăртрĕ: «Кирек мĕнле регион историйĕ те хăйне евĕрлĕ. Хамăрăн истори тымарĕсемпе çыхăнăва çухатмалла мар. Пирĕнпе историпе чун-чĕререн кăсăкланакан çынсем çыхăну тытаççĕ».

О.Печников асăрханă тăрăх – чăн-чăн хастарсем çеç вĕренӳ пособийĕсем, тавра пĕлӳ кĕнекисем хатĕрлес енĕпе ĕçлеççĕ. Чăваш кĕнеке издательствипе 37 çул çыхăну тытакан Т.Артемьева редакторсемпе кĕнекесем хатĕрлекенсен пĕрлехи вĕренĕвĕн курсне йĕркелеме сĕнчĕ.

Хăнасем кĕнеке продукцийĕн пĕчĕк куравĕпе паллашрĕç.

■ **Н.ОСИПОВА**

ĔÇЛЕВ

# «Вĕренме яратпăр, ярмăрккана йыхравлатпăр...»

***2014 çулхи январь–октябрь уйăхĕсенче Патăрьел районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центра пулăшу ыйтса 1336 çын пынă /иртнĕ çулхи çав вăхăтра – 1227/. Ĕççĕр çыннăн официаллă статусне 238-шĕ е 17,8 процентĕ илнĕ. Ĕç шыракан тесе регистрациленисенчен 620-шĕ /46,4 процент/ – хĕрарăмсем, 576-шĕ /43,1/ – 16-29 çулсенчи çамрăксем, 631-шĕ /47,2/ – 14-18 çулсенчи ӳсĕмрисем, 33-шĕ /2,5/ – тивĕçлĕ канăва тухмалли вăхăт икĕ çул юлнисем. Ĕçлеме пултараслăх кăтартăвĕ пур инвалидсен тӳпи – 1 процент /13 çын/, тĕрмерен тухнисем – 0,2 /3/, вĕренӳ заведенийĕ пĕтернĕ хыççăн ĕçе тытăнманнисем – 1,9 /25/. Пулăшу кĕтекенсенчен 387-шĕ /29 процент/ – юлашки вырăнтан хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнисем, предприятие хупнипе е штата пĕчĕклетнипе кăларнисем – 2,9 /39/.***

***Коллективăн кăçалхи вунă уйăхри кăтартăвĕсемпе паянхи кăларăмра центр директорĕ Геннадий АФАНАСЬЕВ паллаштарать.***

**– Геннадий Иванович, сирĕн хӳтлĕхе кĕтекенсем çав-çавах йышлă-и?**

– Çапла. Акă, çамахран, кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçлев центрĕнче 79 çынна регистрациленĕ тĕк /иртнĕ çулхи асăннă тапхăрта – 90/, çав шутра хĕрарăмсем – 70,9 процент /56-ăн/, 30 çула çитменнисем – 30,4 /24-ăн/, пенси ӳсĕмне çывхаракансем – 12,6 /10-ăн/. Вăйпитти ӳсĕмри халăх йышĕпе шайлаштарсан ĕççĕрлĕх шайĕ пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 0,4 процент чакса кăçалхи вунă уйăхра 0,43 процентпа танлашнă.

Ĕççĕр граждансен йышĕнче хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнисен хисепĕ пĕлтĕрхинчен ӳснĕ, 46,8 процента çитнĕ /2013 çулта – 45,5/, предприятие хупнипе е штата пĕчĕклетнипе кайма тивнисен пĕлтĕрхи 20 процентран кăçал 16,4-а çити чакнă. Ĕççĕрлĕхĕн вăтам тăсăмĕ кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3,9 уйăх пулнă /пĕлтĕр – 3,9/.

Кăçалхи вунă уйăхра ĕçлев службине 1275 вакансипурри пирки пĕлтернĕ. Ĕç вăйĕ кирли пирки хыпарлани 346 вакансипулнă /пĕлтĕр – 420/. Вĕсенчен 292-шĕ /84,4 процент/ рабочи профессийĕсемпе çыхăннă.

Ĕç рынокĕнчи кăткăслăх коэффициенчĕ /пĕлтерне пĕр вакансипуçне ĕçпе тивĕçтерекен службăра учетра тăракансен йышĕ/ ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 0,27 единицăна çитнĕ, пĕлтĕр – 0,25.

Кăçал центр специалисчĕсем пулăшнипе 1124 çынна е пулăшу кĕтекенсен 83,3 процентне вырăн тупса патăмăр. Ку кăтарту иртнĕ çулхи çав вăхăтрин 109,5 проценчĕпе танлашрĕ. 7-мĕшне Раççей Федерацийĕн ытти регионĕнче ĕçлĕ тума май килчĕ /пĕлтĕр – 19-шне/.

**– Яланлăх ĕç тупма çăмăл мар паллах. Кун пек чухне общество е вăхăтлăх ĕçе хутшăнтарнин витĕмĕ сисĕмлĕ пуласса́н туйăнать...**

– Обществăн тӳлевлĕ ĕçĕсене йĕркелени чăн та рынокри кăткăслăха сирме пулăшать. Çак мелпе кăçал 172 ĕççĕр усă курчĕ, пĕлтĕр – 151. Вĕсене хутшăнакансен 72,7 проценчĕ – хĕрарăмсем /125 çын/, 17,4 – 16-29 çултисем /30/, 24,4 – служба органĕн центрĕнче учетра ултă уйăхран ытла тăракансем /42/.

Çул çитмен çамрăксене вĕренӳрен пушă вăхăтра вăхăтлăх ĕç тупса парас тĕллевпе районти предприяти-организаципе çирĕплетнĕ 55 килĕшӳ тăрăх 631 ачана хăйсене тыткаламалăх укçа ĕçлесе илмешкĕн май туса патăмăр. Тĕпрен илсен вĕсем – сахал тупăшлă /190/, тулли мар тата йышлă çемьесенчен /30/. 16-шĕ çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссисенче учетра тăрать.

Ĕç тупма кансĕр граждансем тĕлĕшпе те вăхăтлăх ĕç йĕркелессине тĕпе хуратпăр: кăçалхи вунă уйăхра районти предприяти-организаципе тунă 7 килĕшӳ тăрăх 9 çынна вырнаçтартăмăр /пĕлтĕр – 9/. Асăннă мероприятисене сусăрсем /4-ăн/, нумай ачаллă тата пĕччен ашшĕ-амăшĕ /2-ĕн/, пенси ӳсĕмне çывхаракансем /3-ĕн/ хутшăнчĕç.

**– Ĕççĕрлĕх пособине тивĕçни лайăх-ха, çапах ĕçлĕ пулни шанчăклăрах, уйрăмах харпăр хăй ĕçне йĕркелесен. Кун пирки мĕн калан́ă пулăттăр?**

– Ĕççĕр çыннăн статусне предпринимателĕннипе улăштарас кăмăллисем Патăрьел тăрăхĕнче сахал мар. Чылайăшĕ ку енĕпе ăнăçтарать те.



Пĕчĕк бизнес уçас шухăшлисене пирĕн специалистсем пулăшмашкăн яланах хатĕр. Вĕсене бизнес-план йĕркелес тĕлĕшпе усăллă консультаци параççĕ, ку енĕпе ыттисен пухнă паха опытпа паллаштараççĕ, финанс тĕлĕшĕнчен тĕреклетеççĕ. Кăçал, тĕслĕхрен, 1 гражданина хăйĕн бизнесне регистрацилемешкĕн – 850, 3 çынна харпăр хăй ĕçне йĕркелемешкĕн 58800-шар тенкĕ уйăрса патăмăр.

**– Професси вĕренĕвне ярас тĕлĕшпе лару-тăру еплерех?**

– Ĕç рынокĕ ыйтакан профессисене /тракторист, уйрăм хуралçă, котельнăй операторĕ, электрогазосварщик/ вĕренмешкĕн кăçал 48 çынна ятăмăр. Унсăр пуçне ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн илнĕ отпускри хĕрарăмсене тата ачисемпе 3 çулччен ларакан, ĕç хутшăнăвĕнче тăман амăшĕсене çав вăхăтра професси енĕпе хатĕрлес, тепĕр ăсталăха алла илес, квалификацие ӳстерес енĕпе пулăшатпăр. Вĕсенчен 13-шĕ «ПЭВМ операторĕ», «1С: Предприяти» специальноçсемпе професси вĕренĕвне кайрĕ.

**– Çын пултарулăхне, хăй мĕне юрăхлине, чун туртăмне тата ĕç рынокĕ ыйтакан специальноçа алла илнине кура чылай йыварлăхран хăтăлма пулать. Çакна сирĕн специалистсем, паллах, тĕпе хураççех...**

– Унсăрăн епле-ха? Професси ориентацийĕ енĕпе 903 çынна патшалăх пулăшăвĕ патăмăр. Социаллă адаптаци мероприятийĕсене хутшăннă 60 çынран 10-шĕ вырăн тупрĕ, 19-шĕ профессие вĕренме тытăнчĕ.

Çавăнпа пĕрлех 40-ĕн психологи хӳтлĕхĕ илчĕç, çавсенчен 14-шĕ ĕçлĕ пулчĕ, 5-шĕ кăмăла каякан специальноçа хăнăхма пикенчĕ.

2014 çулхи январь-октябрь уйăхĕсенче йĕркеленĕ вакансин 4 ярмăрккине 48 çын пухăнчĕ, вĕсенче сĕннĕ 44 вакансипе тĕплĕн паллашрĕ, хăшĕ-пĕри хăйне юрăхлине суйласа илчĕ.

Кăçалхи тĕллевсем коллективăн пĕчĕк мар. Малашне те çапла кал-кал, ăнăçуллă ĕçлесен эпир вĕсене çĕнсе илме пултармаллах. Çакна тумашкăн майсем çителĕклех: специалистсем ăста та пултаруллă, партнерсем шанчăклă, Чăваш Енĕн Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳлĕхĕ куллен пулăшса-хавхалантарса тăрать.

■ **В.СМИРНОВА хатĕрленĕ**

ЙĔПЛĔ КАРТА ЛЕШ ЕНЧЕ

# Ирĕке усалланса ан таврăнччăр

## Тĕрмене лекни «пĕтнĕ çын» тенине пĕлтермест

***Вĕсем хăйсен ят-хушаматне хаçатра асăнассине хирĕç, телекурав операторĕ видеокамерăна хăйсен еннелле тĕллесен те пуçĕсене пĕкеççĕ – экран çине лекесшĕн мар. Ăнланмалла ĕнтĕ, тăванĕсем тĕрмеколонире вĕт – мухтанмалли-мăнаçланмалли сăлтав мар. Çапах судпа айăпланса йĕплĕ карта леш енне лекнĕ çывăх çыннисен шăпи зала пухăннисенчен кашнинех пăшăрхантарать – çакă Федерацин айăплава пурнăçлакан службин республикăри управленийĕн ертӳçисем вăхăтлăха ирĕклĕхсĕр юлнисен тăванĕсемпе йĕркеленĕ тĕлпулура куç кĕрет сисĕнчĕ.***



Сăмах май, çакнашкал тĕлпулусене йĕркелессине ФСИН управленийĕ йăлана кĕртнĕ ĕнтĕ. Вĕсем усăлли пирки иккĕленӳ çук: Айăплава пурнăçлакан служба ристансен çывăх çыннисемпе çапла тачă çыхăну тытни икĕ еншĕн те лайăх – пĕрне ĕçре пулăшать, тĕрлĕ сăлтава пула ирĕклĕхсĕр юлнисене вара йĕплĕ карта леш енчи пурнăçа кăштах та пулин çăмăллатма май парать.

Республикăра 9 колони, 2 СИЗО. Управлени пуçлăхĕн çын прависем енĕпе ĕçлекен пулăшуçи Иван Велихов пĕлтернĕ тăрăх – халĕ Чăваш Енри юсанмалли учрежденисенче ирĕклĕхсĕр хăварнисен йышĕ 6,6 пине яхăн çынпа танлашать. Иртнĕ çул вĕçĕнче кăна 7,4 пине яхăн çын пулнине шута илсен – йыш палăрмаллах чакни куç кĕрет. Çак шутра 2,1 пин ытла хĕрарăм.

Айăпланнисен хăйсене каçармашкăн ыйтма ирĕк пур. 1-мĕш колонире кăна кăçал 14 çын каçарма ыйтса çырнă. Ыйтăва юсанмалли учрежденире татса памаççĕ – ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи ятарлă комиссире пăхса тухаççĕ, унтан Мускава яраççĕ. Чăн та, кăçал Чăваш Енри колонисенчи пĕр çынна та каçарман, пĕлтĕр çакнашкал майпа пĕр çын ирĕке тухнă.

Юсанмалли учрежденисенче пĕлӳ илме те пулать – 10 вĕренӳпе консультаци пункчĕ ĕçлет. «30 çула çитменнисен тулли вăтам пĕлӳ çук тăк – вĕсен хăйсен кăмăлĕ пулмасан та вĕренмелле. 30 çултан аслăраххисем – хăйсен ирĕкĕпе кăна», – терĕ Иван Анатольевич. Хальхи вăхăтра асăннă пунктсенче 750 çын вăтам пĕлӳ илет, çав шутра 648-шĕ – 30 çул тултарманнисем. Çакă та, паллах, колонисене мĕнлерех контингент лекнине, йышра çамрăксем нумаййине çирĕплетет.

Шел те, ристансем тĕрмеколонире йĕркене пăсни те чылай – кăçал 240 тĕслĕхе шута илнĕ. Çав шутра – спиртлă шĕвексемпе, наркотик хутăшĕсемпе усă курни, хулиганла ĕçсем, колони сотрудникĕсене хăратни е пăхăнманни, юраман япаласем упрани, ĕçе тухма хирĕç пулни тата ыт.те. Йĕркене пăсни кăна мар, преступленисем те пулаççĕ. Кăçалхи январьте айăпланнă П. дежурнăй пулăшуçине çапнă. 4-мĕш колонире тепĕр ристан камерăна ухтарассине хирĕç пулнă май юсанмалли учреждени сотрудникне урипе тапнă. Тата тепри сотруднике пăвма тăнă. Кашни тĕслĕхрех уголовлă ĕç пуçарнă май ристансен айăплав вăхăтне тăснă. Темиçе уйăхлăха кăна мар – 2-3 çуллăхах.

Çапах чи «шавлă» преступлени – судпа айăпланнă Р.Сидоров йĕплĕ карта леш енчен тарни. 3-мĕш колонири çак пăтăрмах, паллах, пакунлă çынсенчен чылайăшĕшĕн хакла ларчĕ – çирĕп явап тытрĕç. Таркăн тĕлĕшпе те çĕнĕ приговор паллă ĕнтĕ – унчченхи приговор вăхăчĕ çумне тата 3 çул хушăннă.

Çапла хăтланса Сидоров республикăри колонисенче айăплав вăхăтне ирттерекен мĕн пур çынна сиенлени те вăрттăнлăх мар. Калăпăр, ристансен ирĕке отпуска каймалли право пур. Анчах, И.Велихов палăртнă тăрăх, «асăннă пăтăрмах хыççăн отпусксем тĕлĕшпе йывăртарах». Урăхла каласан пĕриншĕн пурте явап тытнин сĕмĕ те палăрать.

Тăванĕсене çывăх çыннисен колонисенчи пурнăç условийĕсем кăсăклантараççĕ. Калăпăр, «лайăхлатнă условисем» текен ăнлав пур – вĕсемпе кам усă курать? Управлени ертӳçисем палăртнă тăрăх – кам режима пăхăнать, пур енĕпе те йĕркеллĕ, общество ĕçĕнче хастар, çавсем лайăхлатнă условисенче пурăнма пултараççĕ. Кам йĕркесĕр – вĕсене çирĕп режим условийĕсене куçарасси те часах. Çавна май ирĕкри çывăх çыннисем ристансене «ăс пани», йĕркеллĕ пулма сĕнни пĕлтерĕшлĕ – çакă вĕсем ирĕкре тĕл пулассине çывхартма та пулăшать.

Ахальтен мар ĕнтĕ çулланнă пĕр хĕрарăмпа самай çивĕч калаçу пулчĕ. Унăн хĕрĕ Елена Х. Улатăрти колонире. Амăшĕ каланă тăрăх – юсанмалли учреждени администрацийĕ ăна сăлтавсăрах хĕсĕрлет имĕш. ИК администрацийĕн представителĕн явап тытма тиврĕ – хăйне тата ĕçтешĕсене çапла тӳрремĕнех айăпланине пăхмасăр вăл лăпкă калаçрĕ: «Х.па чăннипех нумай ĕçлеме тивет. Пирĕн пата вăл карантинран килчĕ – СИЗОра чухнех унти сотрудниксемпе хирĕçнĕ. Еленăн пултарулăхĕ пур, аслă юридици пĕлĕвĕллĕскер вĕт, анчах вăл хăйне евĕрлĕ çын – хăйне ыттисенчен çӳллĕрех тытать. Культура мероприятийĕн сценарине çырнă та – тӳрех хавхалантарма ыйтать. «Сирĕн кунти йĕркесене ĕçкĕçсемпе наркомансем пăхăнччăр, эпĕ вара пăхăнмастăп» – акă мĕнлерех позици. Çакă ăна питĕ чăрмантарать. Апла пулин те эпир унпа ĕçлеме, пĕр чĕлхе тупма тăрăшăпăр».

Тепĕр хĕрарăм хăйĕн çывăх çыннипе йĕплĕ карта леш енчи тĕлпулăва кайсан кĕмĕл хĕресне хывтарнипе кăмăлсăрланчĕ: «Çапла тума юрать-и вара?» Иван Велихов хуравĕ ку хутĕнче те уçăмлă пулчĕ: «Тĕлпулăва хаклă йышши металран тунă япаласем илсе кĕме юрамасть – йĕрки çапла, вăл эпир шухăшласа кăларнăскер мар».

Тĕлпулăва килнĕ çамрăк арçын çывăх çыннине ирĕкрен апатçимĕç ытларах пама чарни кăмăлсăрлантарать. Ку енĕпе те – çирĕп нормăсем: «передачăсем» 20 килограмм таран – унтан ытла пулма пултараймаççĕ. Ристансем хăйсен çумĕнче эмелсем упрама пултарайманни пирки те çавнах каламалла – юрамасть!

Çапла ĕнтĕ, йĕплĕ карта леш енче курорта е санаторие кайнă çынсем мар вĕт – преступниксем. Саккуна пăснă – çавăншăн явап тытаççĕ. Анчах приговор вăхăчĕ вĕçленсен ирĕке тухаççĕ – пирĕн вĕсемпе юнашар пурăнма тивет. Унтан пушшех усалланса, патшалăха, влаçсене, обществăна кӳренсе ан тухчăр – асăннă йышши тĕлпулусем çак тĕллеве пурнăçлама та кирлĕ.

**Николай КОНОВАЛОВ.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ



ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Асăрханăр: пăр çӳхе!

## Икĕ кăртăш пулăшăн хăрушлăха ан лекĕр

***Çанталăк сивĕтме пуçласан юханшывсемпе кӳлĕсенче пăр ларать. Анчах ун çине вăл çирĕпленсе çитиччен кĕме васкамалла мар, унсăрăн инкек курасси те часах.***

Ноябрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшĕччен Чăваш Республикинчи шыв объекчĕсенчи хăрушсăрлăхăн уйăхлăхĕ пырать. Çак тапхăрта МЧС ĕçченĕсем халăх хушшинче ăнлантару, вĕренӳ учрежденийĕсенче профилактика урокĕсемпе сехечĕсем ирттереççĕ, çитĕннисемпе ачасен хăйсене пăр çинче мĕнле тытмаллине каласа кăтартаççĕ. Çавăн пекех вĕсем рейдсене тухаççĕ, сивĕ çанталăкра та пулă тытма юратакансемпе, пăр тăрăх шикленмесĕрех çӳрекенсемпе курса калаçаççĕ, вĕсене хăрушсăрлăх правилисем пирки астумалăх çырнисене параççĕ.

«Икĕ кăртăш тытас тесе сывлăхпа пурнăçшăн хăрушлăх кăларса тăратма кирлех-ши? Ку ыйтăва хускатсан пулăçсенчен чылайăшĕ хăй тахçантанпах çак киленĕçпе аппаланнине палăртать, халĕччен нимĕн япăххи те пулман, малашне те пулмĕ тет. Шел, çӳхе пăр çине кĕнĕшĕн вĕсене явап тыттараймастпăр, ун пек статья çук, çавăнпа ăнлантару ĕçĕ ирттеретпĕр. Çыран хĕрринче, шыв хытă юхакан, çăлкуç тапакан, канализаци шывĕ юхса тухакан, хулăн юр выртакан, хăмăш ӳсекен вырăнсенче пăр çӳхерех. Ун пек çĕре пулăçсен те, ыттисен те пыма тăрăшмалла мар», – терĕ Пĕчĕк карапсен патшалăх инспекцийĕн центрĕн Шупашкарти уйрăмĕн патшалăх инспекторĕ Сергей Аршинов. Асăннă уйрăм инспекторĕсем Чăваш Енĕн тĕп хулинчи чылай шкулта профилактика урокĕсем ирттернĕ, Çĕнĕ çулччен пĕтĕм вĕренӳ учрежденине çитесшĕн. Вĕренекенсем практика занятийĕсене, уйрăмах бассейнра йĕркеленнисене, питĕ килĕштереççĕ: вĕсене çăлав жилечĕсене тĕрĕс мĕнле тăхăнмаллине, инкеке лекнĕ юлташне еплерех пулăшмаллине тата ыттине лайăх кăтартса параççĕ-çке. Ача сачĕсенче вара шăпăрлансене йăлтах вăйă урлă ăнлантараççĕ.

Сергей Аршинов хăрушсăрлăх йĕркисене тепре аса илтерчĕ: «Юханшыв е пĕве урлă каçас тесен пăра малтан тимлĕн сăнамалла. Унăн хулăнăшĕ 10 сантиметртан кая мар, тĕсĕ симĕсрех е кăвакрах пулмалла. Çирĕплĕхне урапа тапса тĕрĕслеме юрамасть! Пăр çинче çын çӳренĕ «сукмакпа» утмалла. Ун пекки çук тăк хăвăр маршрута палăртмалла, вăрăм та çирĕп патак илмелле, иккĕленӳ çуратакан вырăнсенчен пăрăнса иртмелле. Пăр авăнчăкрах пулнине, шатăртатнине, ун çийĕнче шыв пуррине асăрхасан-илтсен пĕр тăхтаса тăмасăр каялла таврăнмалла: урана сарса, пăр çийĕпе шутарса /çĕклемесĕр/. Е упаленмелле, шумалла. Пăр çийĕн темиçен каçнă чухне пĕр-пĕрин хыççăн утмалла, хушă 5-6 метр пулмалла. Кайра пыраканнин малтине васкавлă пулăшу пама яланах хатĕр пулмалла. Çанталăк начар чухне /юр çăвать-и, çумăр-и, тĕтреллĕ-и/ тата çĕрле пăр çине кĕмелле мар. Инкеке лекнисене асăрхасан Çăлав службин пĕрлехи телефонĕпе – 112 – шăнкăравламалла!» Вăл çынсен ачасемпе уйрăмах тимлĕ пулмаллине, çул çитменскерсене хăйсем тĕллĕн пăр çине кĕртме юраманнине каларĕ.

Кăçалхи октябрь-ноябрь уйăхĕсенче Чăваш Енре çынсем пăр айне анса кайни пулман. Малашне те ан пултăрччĕ. Паллах, çанталăк сивĕтнĕçемĕн пăр çине кĕрекен нумайланать, çапах асăрханулăх пирки самантлăха та манас марччĕ.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**





# ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

*Ятарлă кăларăм*

ÇĔР

## Юрăхсăрлатма – çур кун, лайăхлатмашкăн – ĕмĕр

***Çĕрпе çыхăннă йĕркесĕрлĕхсем пирки калаçнă май «салатма пĕр талăк, пуçтарма çулталăк» текен каларăш аса килет. Эпĕ ăна кăшт кăна улăштарнă пулăттăм: «Юрăхсăрлатма – çур кун, лайăхлатмашкăн – ĕмĕр». Специалистсем каланă тăрăх юрăхсăрлатнă тăпра хăй тĕллĕн вăрах пулăхланать: <u>пĕр сантиметр валли пĕр ĕмĕр кирлĕ!</u>***

***Çакăн пирки ялта çуралса ӳснĕ кашни çынах пĕлмест пулĕ. Унсăрăн çĕре çаплах хĕн кăтартас çук! Нумайăшĕ çут çанталăкран пайта илесшĕн, анчах та ун умĕнчи парăма татасшăн мар. Пурнăçра та, çутçанталăкра та йăлтах шайлашуллă пулмалла-çке: илтĕн – тавăр.***

### Çĕрĕн паха сийĕ ăçта?

Çĕмĕрле районĕнче, сăмахран, хăй тĕллĕн, тĕрĕсрех каласан, никамран ирĕк илмесĕр, Дубовка ялĕ çывăхĕнче «Дубовский песок» общество хăйăр кăларнă. Çавна май 0,22 гектар çĕрĕн çиелти сийне хырса илнĕ. Ăна пĕр вырăна купаласа хунă пулсан ытлашши ыйту çуралас çукчĕ. Çапла вара административлă тĕпчев ирттерсе унти лару-тăрăва уçăмлатма тивнĕ. Пулăхлă тăпрана вырăнтан хускатнăшăн предприятие 20 пин тенкĕлĕх штрафланă. Кунсăр пуçне предписанипе килĕшӳллĕн ку йĕркесĕрлĕхе палăртнă вăхăта пĕтермелле.

Кунашкал тĕслĕх Комсомольски районĕнче те тĕл пулчĕ. «Восток» хуçалăх 1,26 гектар çинче хăйăр кăларнă хыççăн рекультиваци ирттермен. Хуçалăха РФ КоАПĕн 8.7 статйин 1-мĕш пайĕпе айăпланă: штраф – 40 пин тенкĕ.

Куславкка районĕнче вара харăсах виçĕ хуçалăхăн /«Мыков» ЯХПК, «Родина» ЯХПК, «Вега» общество/ кăпăшка çĕрне тăмпа хутăштарса янă тĕслĕхе тĕпчерĕç Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем. Тутарстанри пĕр предприяти тимĕр пăрăхсем кăларнă. Анчах та траншейăна йĕркеллĕ хуплас тесе ăшталанман. Вырăн-вырăнпа тарăн путăксем тăрса юлнă. Пулăхлă сие демонтаж ĕçĕсене пуçличчен уйрăм çĕре купаласа хумалла пулнă. Çак йĕркене пăхăнманнине пула лайăх тăпра тăмпа хутăшнă та.

Хупласа çитереймен траншейăна пула çураки ирттерме те питĕ кансĕр пулнине палăртнăччĕ çĕре арендăна илнĕ хуçалăх ĕçченĕсем. Паллах, вырмара та чăрмав кӳнĕ çак лаптăк. Çитменнине, лаборатори тĕпчевĕсем çав вырăнта кали, фосфор тата гумус виçи чакнине çирĕплетнĕ.

«Устра» обществăна та административлă майпа явап тыттарма тивнĕ: штраф – 30 пин тенкĕ. Асăннă предприяти 1000 тăваткал метр çинчи пулăхлă тăпрана хырса илнĕ.

Патшалăх çĕр надзорĕн пайĕн пуçлăхĕ Виталий Шашкаров каланă тăрăх, чăнах та, нумай чухне çул-йĕр тунă е юсанă чухне лайăх çĕрсем вакланаççĕ. Çĕр айĕнчи пурлăха кăларнă май та пулăхлă тăпрана сая янă тĕслĕх сахал мар.

Акă нумаях пулмасть Вăрнар районĕнчен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе тĕллевсĕр усă курни пирки управление пĕлтерчĕç. Административлă тĕпчев, чăнах та, Кӳстӳмер çывăхĕнче хăйăр кăларнине çирĕплетет. Çав арçыннăн çĕр ĕçĕ ирттерме ирĕк паракан документсем пулман, рекультиваци проектне те хатĕрлемен. Саккуна пăсса йĕркеллĕ сие вырăнтан тапратнă лаптăк – 0,1 гектар.



10 уйăхра паха сие ирĕк илмесĕр вырăнтан куçарни тĕлĕшпе 10 протокол хатĕрленĕ управлени инспекторĕсем.

### Çын айăпĕсĕр мар

Çĕр çинчи шелсĕр ĕç-пуçран кăна мар, çӳп-çап куписенчен те, çум курăк тапса тухнипе те пулăхлăх самай чакать. Çакна лаборатори тĕпчевĕсем те яр уççăн çирĕплетеççĕ. Кăçал, калăпăр, асăннă управлени специалисчĕсем Чулхулари референт центрне тата Тутарстанри Регионсен хушшинчи ветеринари лабораторине пĕтĕмпе çĕрĕн 407 пробине ăсатнă. Кунашкал тĕпчевсене çулсерен пĕр тĕллевпе ирттереççĕ: сиенлĕх тата пулăхлăх шайне палăртмашкăн тата агрохими тĕлĕшпе. Пĕтĕмлетӳсем Чăваш çĕрĕ, чăнах та, шар курнине пĕлтереççĕ. 38 хутаçри çĕрĕн пулăхлăхĕ палăрмаллах чакни паллă. 28-ĕшĕнче – сиенлĕ япаласен шайĕ нормăран пысăкрах. Сăмахран, 20-ĕшĕнче нитрат калăпăшĕ, 12-шĕнче – йывăр металсен тата 10-шĕнче – бензапирен.

### Сиенĕ пысăк!

Çĕр-аннемĕр тӳсет. Çынсен явапсăрлăхĕ тивĕçлĕ органсене лару-тăрăва хутшăнма хистет. Акă кăçал кăна управлени специалисчĕсем административлă тĕпчевсем ирттернĕ май 5 лаптăка сиен кӳнине ятарлă методикăпа шутласа кăларнă. Пĕтĕмпе 24,62 гектар производство юлашкийĕсене тата йăлари хытă каяшсене пăрахнине тата вĕтĕ чулпа, çавăн пекех хăйăрпа, тăмпа хутăштарса янине пула хур курнă. Сиен виçи 348 миллион тенкĕпе танлашнă. Айăплисене рекультиваци проекчĕ хатĕрлесе япăхлатнă çĕрсене малашне усă курмашкăн юрăхлатма хушса предписани панă.

Хальлĕхе хăйсен ирĕкĕпе 1,18 гектара йĕркене кĕртнĕ. Ку – 11 миллион та 410 пин тенкĕлĕх сиен.

Хальхи вăхăтра управлени специалисчĕсем Шупашкар районĕнчи пысăк пĕр предприяти çĕре 320 миллион тенкĕлĕх сиен кӳни тĕлĕшпе тавăç хатĕрлеççĕ. Сумма калама çук пысăк! Ваттисем çын йăнăшĕнчен вĕренме хушнă. Çак тĕслĕхрен ытти хуçалăх пĕтĕмлетӳ тăвĕ-ши?

■ **Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**управлени ĕçченĕ**

ПРЕСС – ТУР

## Тӳрĕ кăмăлсăр подрядчиксене пула...

***Хальхи çамрăксем ашшĕ-амăшĕ тата маларах ӳсĕмри йăхташĕсем краççын лампин вăйсăр çутипе еплерех тертленнине, хăйăвĕ мăкăрланса тĕтĕм кăларнăран трахома чирĕпе асапланнине пĕлмеççĕ паллах. Анчах паянхи кун та электричествăсăр пурăнакансемшĕн кĕрхи вăрăм каçсенче пӳлĕмре мĕлтлетекен çутă кăштах палăрни те телей, вăл çумри юлташ пекех туйăнать.***

Электроэнерги вăйĕпе усă курма пултарайман çынсем республикăра халĕ те пур-ха.

ЧР Промышленноçпа энергетика министерствине ертсе пынă Юрий Волошин 2010 çулта 223 объект тума 321,7 млн тенкĕлĕх 63 контракт тунă. Патшалăх килĕшĕвĕсене алă пусма подряд организацийĕсем те хутшăннă. Чылайăшĕ тӳрĕ кăмăллă пулман. Ĕç укçин пĕр пайне аванс шучĕпе илнĕ, анчах хăйсен обязательствисене пурнăçламан.

ЧР Строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствин ирĕксĕррех килĕшĕве сăмах тытман подрядчиксене суд урлă пăрахăçлаттарса йышăннă правилăсемпе килĕшӳллĕн объектсене электрификацилессине вĕçлеме майсем шырамалла пулса тухнă.

Ĕçе вăхăтра пурнăçламаншăн «Степ», «СтройГранд-Групп», «ТСК «Парнас», «Сатурн-Строй» тулли мар яваплă обществăсемпе патшалăх контрактне татнă.

Министерство журналистсене электричество кĕртсе пĕтерейми урамсене илсе кайса пресс-тур ирттерчĕ. МИХ представителĕсем Шупашкар районĕнчи Якутарта ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Евгений Зубковпа тĕл пулчĕç. Евгений Аркадьевич ячĕшĕн вăй хунă «Степ» организацие пула Сад урамĕнчи çынсем темиçе çул çутăсăр пурăннине пĕлтерчĕ.

Якутар пысăк мар, халĕччен 22 çурт çеç шутланнă. Шупашкартан 2 çухрăмра кăна вырнаçнăран ял юлашки çулсенче ӳссех пырать. 1992-1996 çулсенче 58 çĕр лаптăкĕ уйăрнă, анчах строительство электричествăсăр вăраха тăсăлать. «Çутă çукран яла чун туртмастчĕ, сайра хутра килсе çӳреттĕм. Ытларах тĕп хулара пурăнтăм. Ĕмĕре кунта ирттерекенсем генераторсем туянатчĕç», – тет Виталий Арсентьев.

– Эпир электрификаци программине 2008 çулта лекрĕмĕр. Подряд организацийĕ те тупăнчĕ. Ĕмĕт пурнăçланасса шанса хытах савăнтăмăр, анчах кăлăхах пулчĕ. Кăçал ЧР Правительстви бюджетран 1,28 млн тенкĕ уйăрнипе çĕнĕ организаци çак ĕçе эрнерех – сентябрь пуçламăшĕнче вĕçлерĕ, – терĕ Евгений Зубков.

Калаçăва ял лавккинчи Алевтина Владимирова сутуçă та хутшăнчĕ. «Ку ялта эпир 1998 çултанпа пурăнатпăр, – терĕ. – Пачах çутăсăр мар-ха, пĕр лини килет. Çĕрсе çитнĕ юпасем тӳнетчĕç. Час-часах татăлакан пралуксене сыпса хăшкăлаттăмăр. Холодильник, ытти электроприбор юрăхсăра тухатчĕ. Пайтах тертленнĕ».

Халĕ урам тăршшĕпех икĕ енĕпе тимĕр-бетон юпасем лараççĕ. Пралук тăрăх электроэнерги куçать, вăл кашни килех кĕрет.

Канаш районĕнчи Муллаварти Çамрăксен урамĕнче çуртсене электричество кĕртес ĕç вĕçленеймен-ха. «Çынсем ăна 4 çул кĕтеççĕ. «Сатурн-Строй» организаци чылай ĕç пурнăçланăччĕ, анчах ăна ытла вăраха тăсса халĕ те пĕтереймерĕ. Çавăнпа «РСП «Энергосетьстрой» тулли мар яваплă обществăпа çĕнĕ килĕшӳ турăмăр. Объект декабрьте хута каймалла, – терĕ Хучел ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Леонид Иванов. – Юпасен тăррине электрохунар çакнă. 15 килте Çĕнĕ çула тĕрлĕ тĕспе ялтăракан чăрăш асамлăхĕпе савăккăн кĕтсе илеççех».

ЧР строительство министрĕн заместителĕ Сергей Безруков каланă тăрăх – республикăра халĕччен электроэнерги пыман 6 объекта çулталăк вĕçлениччен хута ямалла. Муркаш районĕнчи Вăрманкассинчи ял тăрăхĕнче трансформатор подстанцине вырнаçтармалла. Пиллĕкĕшĕнпе çĕнĕ подрядчиксемпе – «Тимсистем» тата «РСП «Энергосетьстрой» ОООсемпе – контрактсем тунă. Вĕсем Канаш районĕнчи Асхва, Муллавар, Энтрияль ялĕсенче, Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнчи Атнарпа Хĕрлĕ Чутайра ĕçе çывăх вăхăтра вĕçлес тĕллевлĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

• ➡ 6, 11, 12 стр.

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Старостăсен ĕçне хаклама вăхăт

***– Малтанхи вăхăтра иккĕленнĕччĕ, халĕ шанчăклăнах çапла калама пулать: пирĕн тăрăхра пурăнакансем старостăсен пĕлтерĕшĕ мĕнлерех вырăн йышăннине тĕрĕс ăнланса илчĕç, – тет Йĕпреç районĕнчи Пучинке ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Федоров. – Савкка ялĕнче çак тивĕçе пурнăçлакан Сергей Наумов мана кулленхи ĕçре пулăшать. 20 киллĕ ялти пĕр мероприяти те Сергей Петрович хутшăнмасăр иртмест. Унăн опытне ыттисем патне çитерес тĕллевпе нумай пулмасть кăна-ха вырăнти администраци Савккара старостăсен канашлăвне ирттерчĕ, çавăн чухне вăл тăватă ялти ĕçтешĕсене хăйĕн ĕç-хĕлĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ.***

Тĕп ялтан тăватă çухрăмра вырнаçнă Савккана тахçан «малашлăхсăррисен» шутне кĕртнĕччĕ. Халĕ урăхла сăн кунта. Яла темиçе çул каяллах асфальт çулпа çыхăнтарнă. Пур кил-хуçалăхра та «сенкер çулăм» çунать. Сергей Петрович ентешĕсене лăпкăн пурăнма парасшăн мар. Çуркунне-кĕркунне ял халăхĕ тавралăха тирпей-илем кÿме кар тухать. Акă кăçалхи сентябрь-октябрь уйăхĕсенче кăна Савккапа Çĕнĕ Кĕлĕмкасси çыннисем 1000 ытла хыр-чăрăш хунавĕ лартнă. Наумов староста халĕ тăван ялне этноял туса хурас тĕлĕшпе тимлет, ку ĕçре ăна хăйĕн кĕрÿшĕ, Йĕпреçри этнографи музейĕн директорĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, паллă сăмахран ĕçе куçас шанăç пур. Çĕршывăн уйрăм регионĕсенче «лав» тапраннă та ĕнтĕ. Авă, пирĕнпе кÿршĕллĕ Чĕмпĕр облаçĕнче Раççейре чи малтан «Ял старостисен саккунне» туса хатĕрленĕ тата çирĕплетнĕ. Кун пирки хăй вăхăтĕнче «Вырăнти хăй тытăмлăх» кăларăм çырнăччĕ. Çав документпа килĕшÿллĕн, асăннă облаç кĕпĕрнаттăрĕ уйрăмах хастар старостăсене хавхалантарма мерăсем палăртнă. Кăçалтан пуçласа вĕсем Ульяновск облаçĕн правительствин йышăнăвĕпе социаллă пулăшу çăмăллăхĕсене илсе тăма тытăннă иккен. Тĕслĕхрен, старостăсене çурт-йĕрте пурăннăшăн, çутăшăн, хутса ăшăтнăшăн тухакан тăкаксене саплаштарса параççĕ, вĕсене ял халăхĕн ыйтăвĕсене пурнăçланă чухне

*Историрен*

### Ун чухне çапла пулнă

**Ял старости – Раççей империйĕн ялти влаçĕн «иерархийĕнче» чи аялти пусми. Халăх суйласа лартнă çак çыннăн прависемпе тивĕçĕсене 1861 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче крепостла пăхăнулăхран тухнă хресченсен пĕтĕмĕшле йĕрки çинчен кăларнă документра çирĕплетсе хăварнă.**

**Старостăна ял пухăвĕсенче виçĕ çуллăха суйланă, вăл çав пухусене пухма, салатса яма, вĕсен кун йĕркисене туса хатĕрлеме, тивĕçлĕ йышăнусем кăларма, вĕсем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăма пултарнă. Право йĕркипе общество тăнăçлăхне сыхлас тĕлĕшпе мерăсем йышăнассине те, документсăр çынсене тытса чарассине те ăнах шанса панă. Староста вуткăварпа, шыв-шурпа, чир-чĕрпе кĕрешессине те йĕркелесе пынă. Хырçă-марçă тÿлессине мĕнлерех туса пынишĕн те вăлах яваплă пулнă. Хăйне шанса панă тăрăхра пурăнакан пур çын та старостăна пăхăнса тăнă.**

**Старостăна çавăн пекех йĕркене пăснă пули-пулми тĕслĕхшĕнех айăплă çынна икĕ кунлăха хупса лартма, 1 тенкĕлĕх штраф хума е икĕ кун таран ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме ирĕк панă…**

тавра пĕлÿçĕ Александр Майоров витĕмлĕ пулăшу парать...

Пучинке ял тăрăхĕн пуçлăхĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕшĕн шанчăклă та тĕп вăй пулса тăнă старостăсене хăйсен чун-чĕри хушнипе пурнăçлакан ĕçшĕн хавхалантарасси паяна çитсе те хисеппе пулманнипе кăмăлсăррине пытармарĕ. «Йăлтах укçасăр-мĕнсĕр тăваççĕ. Тепĕр чухне вĕсене халăха явăçтарса пурнăçламалли ĕçе сĕнме те именекен пултăм, – пĕлтерет Николай Георгиевич. – Вырăнти бюджетра çавна валли нухрат уйăрса хăварман. Çулталăк вĕçĕнче те старостăсене пархатарлă ĕçшĕн чыслама укçа тупайманшăн кама айăпламалла? Хăй пирки тăтăшах аса илтерсе тăракан федерацин 131-мĕш саккунĕнче те кун пирки пĕр йĕркере те асăнни çук. Эпир вара хамăр тĕллĕн пĕр утăм та тăваймастпăр çав...»

Тĕрлĕ çĕре тухса çÿреме тивнĕ май эпĕ ял старостисене хавхалантарассипе çыхăннă ыйтăва ытти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен умĕнче те пĕрре кăна мар çĕкленĕ, анчах татăклă та усăмлă хурав кĕтсе илеймен. Тепĕр тесен, тулли хурав пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен çак тивĕçе пурнăçа кĕртме шаннă çынсене пурлăхпа хавхалантарассине хальлĕхе Раççей Федерацийĕн шайĕнче татса парайман-ха.

Анчах ку ыйту çывăх вăхăтрах пассажирсем илсе çÿрекен автотранспортпа усă курма кашни уйăхрах хушма 220 тенкĕпе тивĕçтереççĕ. Паллах, нумай теейĕмĕн, анчах чи пĕлтерĕшли кунта – ял старостисен ĕçне тĕрĕс те вăхăтлă хаклама май тупăнни.

Çак йĕркесен авторне нумай пулмасть Чĕмпĕр тăрăхĕнчи Çĕнĕ Спасск районĕнчи Троицкий Сунгур салинчен Йĕпреç поселокне хăнана килнĕ Александр Авдеевпа курса калаçма тÿр килчĕ. Вăл ял старостин тивĕçне виççĕмĕш çул пурнăçлать-мĕн. «Хамăра çÿлти пуçлăхсем асăрханăшăн савăнтăмăр, – терĕ вăл социаллă пулăшу мерисемпе кăмăллă пулнине палăртса. – Çакăн хыççăн ТОС ĕçĕ те çĕнĕ хăватпа вăй илчĕ, территорири обществе хăй тытăмлăхĕ халĕ салари пур çынна та пĕрлештерсе тăрать. Пĕрлешÿллĕ йышпа палăрăмлă чылай ĕç тума ĕлкĕретпĕр».

Сăмах та çук, ял старостисем вырăнта калама çук пысăк та кирлĕ ĕç пурнăçлаççĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçне кăтартуллă та пуçарулла йĕркелес енĕпе уйрăм регионсем старостăсем пирки йышăнакан саккунсен пуххи пурăна-киле çак тивĕçе пурнăçлама шаннă çынсене патшалăх пулăшăвĕн çирĕп тытăмне туса хатĕрлеме май паракан тĕп саккуна çаврăнасса кĕтсе илетпĕрех пулĕ-ха. Пирĕн шухăшпа, ял старостин малашлăхĕ пулмаллах!

**Геннадий КУЗНЕЦОВ**

ЭЛĔК ТĂРĂХĔНЧЕ

## Хуçасăр çĕр юлмĕ

Районта федерацин «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен çаврăнăшĕ çинчен» саккунне туллин пурнăçлас тĕллевпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пĕтĕмĕшле харпăрлăхра шутланакан тата хуçасăр юлнă ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр лаптăкĕсене регистрацилессине аван йĕркеленĕ. Тĕслĕхрен, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 14334,52 гектар çĕре харпăрлăха куçарнă. Ку муниципалитет территорийĕнчи çĕрсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 47,6% шутланать. Çĕре харпăрлăха куçарас ĕç Питĕшкасси /1318,44 га, 72,2%/, Крымсарайккă /1250,94 га, 67,2%/ тата Чăваш Сурăм /1826,36 га, 54,5%/ ял тăрăхĕсенче уйрăмах аван пырать.

Элĕк тăрăхĕнче хальлĕхе хуçине палăртман çĕр пайĕсен лаптăкĕн калăпăшĕ те пĕчĕкех мар – 14997,64 га. Саккуна пăхăнса çав шутра пулнă 2727 ытларах гектарне муниципалитет йĕркеленĕвĕн харпăрлăхне куçарнă.

Çĕр пайĕн эткерçисен хăйĕн лаптăкне харпăрлăха куçармасăр, ăна илмесĕр тăма ирĕк пур. Ку правăпа ĕнерхи кунччен 1119 çын усă курнă, çĕр пайĕсене /2186,03 га/ районти патшалăх тÿлевсĕр тавăрса панă.

## Хушма хуçалăха аталантарма

Ял çынни унăн усăлăхне тахçанах туйса илнĕ. Çавăнпа та районта патшалăх пулăшăвĕпе усă куракансен йышĕ çултан çул ÿссех пырать. Кăçалхи январь-октябрь уйăхĕсенче кăна, акă, Элĕк енри 428 çын ăратлă выльăх-чĕрлĕх туянма, ăна валли хуралтăсем çĕклеме, ытти тĕллевпе 81 млн та 27 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ. Наци проекчĕ пурнăçланма тытăннăранпа Элĕксем 666 млн та 656 пин тенкĕлĕх е уйрăм çынсен пĕтĕмĕшле хушма хуçалăхĕсен шучĕн 49,1% чухлĕ кредитпа усă курнă.

## Сум кăна мар, парне те

Чăваш Сурăм ял тăрăхĕнчи Какаç ялĕнче пурăнакан, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче ырми-канми ĕçленĕ Мария Ильинана 90 çулхи юбилейĕпе саламлама тăван-пĕтенĕ кăна мар, Элĕкрен те, ытти çĕртен те йышлăн килсе çитрĕç. Район администрацийĕн вĕренÿ пайĕн ертÿçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Наталия Николаева Мария Ильиничнăна Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн саламне пачĕ. Унсăр пуçне хисеплĕ ватăна социаллă хÿтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Галина Григорьева, Чăваш Сурăм ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕ Инга Игнатьева ăшшăн саламларĕç, парнепе чысларĕç.

Ветеран хăйне аван туять, пурнăçри пур саманта та лайăх ас тăвать. Шĕвĕшри шкулта тăватă класс кăна вĕреннĕ, ĕмĕрне тăван хуçалăхра ĕçлесе ирттернĕ, хастарлăхĕпе, ырă кăмăлĕпе ял-йышра ят-сум çĕнсе илнĕ. Çулĕсем пур пулин те халĕ те пушă лараймасть тăванĕсемпе çывăх çыннисен хÿттинче пурăнакан ĕç ветеранĕ.

**А.СТЕПНОВ**

ХАСТАР

# Сăпайлă, тăрăшуллă, пуçарулла

***– Ман çинчен çырма кирлех-ши? Пĕтĕм ĕçе туслă коллективпа пурнăçлатпăр, – тесе кĕтсе илчĕ «Акконд-агро фирма» акционерсен хупă обществин сĕт-çу комплексĕн ертÿçи Николай Мальцев эпĕ кунта килнин тĕллевне пĕлтерсен. Николай Яковлевич пĕрле ĕçлекенсен тăрăшулăхĕ çинчен тем вăхăт каласа пама хатĕр. Николай Степанов, Иван Лебедев, Ирина Матвеева ветеринари врачĕсем, Алексей Максимовпа Галина Павлова зоотехниксем, Венера Иванова техник-осеменатор, Аркадий Васильев электрик-механик комплексра нумай çул, пĕтĕм вăй-халĕпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕ ытларах туса илессишĕн тăрăшаççĕ.***



• Николай Мальцев депутат.

Комплексра пĕтĕмпе майракаллă 1349 шултра выльăх, вĕсенчен 625-шĕ – сăвакан ĕнесем. Паян кашни ĕнерен 18,4 кг сĕт суса илеççĕ, 10 уйăхра ĕне пуçне лекекен сăвăм – 5190 кг. Полина Семина, Антонина Антонова, Екатерина Георгиева операторсем çуллен пысăк çитĕнÿ тăваççĕ. Екатерина Геннадьевна кăçал сĕт сăвакан операторсен республикăри конкурсĕнче пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. Галина Павловăпа Венера Иванова та республикăри тупăшусенче малти вырăнсене йышăннă. Любовь Никандрова пăру пăхакапа Алина Гурьева скотник ĕçĕпе те кăмăллă ертÿçĕ.

– Çапла, кун хыççăн иртсе пырать, «Аккондра» ĕçлеме пуçланăранпа сакăр çул çитрĕ, – аса илÿ çăмхине малалла сÿтет Николай Яковлевич.

Çăмăл килмен унăн çамрăклăхĕ. Амăшĕ Матрена Яковлевна ĕмĕрĕпех фермăра ĕçленĕ майăн уроксем пĕтнĕ хыççăн унта чупнă. Çĕрпÿре техник-механика вĕренсе тухнă каччăна малтан бригадира, унтан управляющие çирĕплетеççĕ. «Победа» совхозри Амалăх уйрăмĕнче 12 çул пĕтĕм ĕçе йĕркелесе пырать вăл. Ун хыççăн вунă çул ытла колхоз ертÿçинче тăван хуçалăха аталантарма вăй хурать. Çак тапхăрта ĕне тата сысна витисене хута янă, машина-трактор паркĕнчи хуралтăсене, тырă складĕсене çĕнетнĕ, пилорама, çăнăх арманĕ хута янă. Тăрăшуллă çамрăкка ял тăрăхĕн депутачĕ пулма суйлаççĕ. Çирĕм çул ытла ĕнтĕ вăл – халăх «тарçи». Урамсене тирпей-илем кĕртессипе нумай ĕçлеме тивет депутатăн. Хăй вăхăтĕнче ял хушшинче, колхозăн производство объекчĕсене асфальт çулпа çыхăнтарассипе тимленĕ, ĕçмелли шыв ыйтăвне татса пама тăрăшнă. Акă иртнĕ çул та Амалăхра çĕнĕ тараса тума май килтернĕ. Ревизи комиссийĕн членĕ Тĕмер ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн ларăвĕсене тăтăшах хутшăнать, ырă сĕнÿ сахал мар парать, пуçарусене пурнăçлама тăрăшать.

Вăхăт хăйĕн майĕпе шăвать. Николай Яковлевич кусăн мар майпа аслă пĕлÿ илет. Ялти пикепе Татьяна Ивановнăпа çемье çавăрса хĕрпе ывăл çитĕнтереççĕ. Ачасем аслă пĕлÿ илсе пурнăç çулне тупнă ĕнтĕ, халĕ мăнук та пур.

«Ĕçне кура хисепĕ», – теççĕ. Тĕрлĕ Хисеп хучĕ, хаклă парне илме тивĕç пулнă хастар ĕçчен. Кăçал вара Николай Яковлевича ĕçри çитĕнÿсемшĕн Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине парса чысланă. «Тăвай районĕнчи чи лайăх ял хуçалăх ĕçченĕ» асăнмалăх медаль те унăн тăрăшулăхне палăртать.

**Валерий ЧАЙКИН.**

Тăвай районĕ.

Автор сăнÿкерчĕкĕ

→11, 12 стр.

ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

# «Паян – ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлесчĕ»

*Шăпах çак чĕнĕве тĕпе хурса пурăнать Елчĕк районĕнчи "Рассвет" ЯХПК председателĕ Юрий Мясников. Çавăн пекех вăл райадминистраци пуçлăхĕн Николай Миллинăн сĕнĕвне те – производствăна кашни уйăхра темиçе процент та пулин ӳстерсе пымалла – асра тытса ĕçлет. Çакă кăтартусене лайăхлатма май парать те.*



Реклама

Акă "Рассвет" ЯХПК кăçал вырмара пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене туса илес енĕпе районта пĕрремĕш вырăна тухнă, ăна Ял хуçалăх ĕçченĕсен кунĕнче куçса çӳрекен ялав тата Диплом парса чысланă. 1 гектартан 32,1 центнер тĕш тырă пухса кĕртнĕ. Сăмах май, предприяти пĕлтĕр те çак ăмăртура çĕнтерсе ялава тивĕçнĕ. Унсăр пуçне тăрăшса ĕçленĕшĕн професси уявĕнче Нина Иванова дояркăна, Феодосия Красильникова свинаркăна, ĕне фермин заведующине Анатолий Григорьева ЧР Ял хуçалăх министерствин, райадминистрацин Хисеп хучĕсемпе наградăланă. Хуçалăх ĕçченĕсем ытти енĕпе те маттур. Кăçалхи Акатуйра вĕсем çĕрпе тухăçлă усă курнăшăн кубока тивĕçнĕ.

Юрий Мясников пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене 570 га çинче туса илнине пĕлтерчĕ. Кăçал кĕрхи ырашпа тулла 220 га çинче акса хăварнă. Пĕтĕмпе 1500 га çĕрпе усă кураççĕ. Аслă Таяпа ял тăрăхĕнчи пушă выртакан 250 га çĕре 3 çул каялла çаврăнăша кĕртнĕ. Пĕтĕм лаптăкра кĕрхи çĕртме туса хăварнă, çĕре плугпа сухаланă. Кашни ĕçе вăхăтра тума тăрăшаççĕ "Рассветра" вăй хуракансем, пурнăç таппипе тан пыма ăнтăлаççĕ.

Кăçал тырă тасатмалли-типĕтмелли комплекса çĕнетнĕ, ВЦС-1 хатĕр вырнаçтарнă. Проект хакĕ – 2 млн ытла тенкĕ. "Çĕнĕ комплекспа вырма вăхăтĕнче усă куртăмăр. Вăл тырра лайăх тасатать, алă вăйĕпе пурнăçламалли ĕçе пăрахăçлать. Ытти çулсенче йĕтемре 10-15 çын вăй хуратчĕ, кăçал 5-ĕнех ĕлкĕрсе пычĕç: 1 машинист, тепĕр 4-шĕ – ăна пулăшакансем", – каласа кăтартрĕ Юрий Вячеславович. Кăçалах пăру витине тĕпрен юсаса çĕнетме пуçланă. Шалти ĕçсене вĕçленĕ ĕнтĕ: тислĕк кăларакан транспортера, ĕçтеркĕчсене улăштарнă, пӳлмексене юсанă, апат памалли вырăн тунă... Тепĕр çул тăррине çĕнетесшĕн, "световой конек" тăвасшăн.

Хальхи вăхăтра ЯХПКра 500 пуçа яхăн мăйракаллă шултра выльăх, çав шутра 170 сăвăнакан ĕне. 800-е яхăн сысна усраççĕ. "Выльăх шутне чакарасшăн мар, майĕпен ӳстерсе пырасшăн", – терĕ председатель. Выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ: тĕш тырă та, утă-улăм та, сенаж та... Силос тумашкăн кашни çулах 60 га куккурус çитĕнтереççĕ. Техника паркне те çĕнетсех пыраççĕ.

"Рассветра" паянхи кун 55 çын ĕçлет. Çамрăксем те пур. 30 çула çитменнисем механизаторта вăй хураççĕ. Шалу вăхăтра тӳлеççĕ. Вăтам ĕç укçи – 12 пин тенкĕ. Ĕçченсене утă-улăмпа, тырăпа кашни çулах тивĕçтереççĕ. Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх иртерекен пухура чи хастаррисене хаклă парнесем парса хавхалантараççĕ. Çанталăк условийĕсем ура хунине, продукци хакĕ чакса каянине тата ытти чăрмава пăхмасăр хăйсен тивĕçĕсене таса чунран пурнăçлакансем чăнласах та мухтава тивĕçлĕ! "Йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма килте йăлтах лайăх та йĕркеллĕ пулни тата ял хуçалăх предприятийĕнче тăрăшса ĕçлекен çынсем пурри пулăшать", – вăрттăнлăха уçрĕ Юрий Мясников. Н.Енедеров тĕп инженера, ĕне тата сысна фермисен заведующийĕсене А.Григорьевпа Е.Сергеевăна, В.Цыганов агронома, ертӳçĕ заместительне Н.Тимофеева, М.Сергеевăпа Н.Иванова дояркăсене, О.Григорьева пăру пăхакана, И.Аввакумова осеменатора, М.Петровпа В.Сергеев тракторист-комбайнерсене, С.Баймушкин, М.Александров, С.Кириллов, В.Иванов, Г.Алексеев трактористсене, С.Афанасьев, А.Чернов, В.Мясников водительсене, В.Егоров слесаре, Н.Лаптев скотник-кĕтӳçе, В.Егоров скотнике лайăх енчен çеç палăртрĕ вăл.

Юрий Вячеславович "Рассветра" 30 çула яхăн ĕçлет, председатель должноçĕнче – 10 çул. 10 класс пĕтерсенех вырнаçнă вăл кунта, бригадиртан пуçласа ертӳçе çитнĕ. Агроном специальноçне алла илнĕскерĕн ашшĕпе амăшĕ те ял хуçалăхĕнче вăй хурса тивĕçлĕ канăва тухнă. Юрий Мясниковăн ывăлĕ Вячеслав Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче агроинженера вĕренсе тухнă хыççăн тăван хуçалăхрах водительте, трактористра ĕçлет. Тепĕр ывăлĕ те хальхи вăхăтра çав аслă шкултах пĕлĕвне тарăнлатать. Вăл та ĕç династине малалла тăсасса шанас килет. Мясниковсем ял хуçалăхне, тăван çĕре чăнласах та юратаççĕ, çак отрасль аталансах, производство ӳссех пытăр тесе хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăваççĕ. "Эпир ĕçлеме яланах хатĕр", – терĕ йăл кулса Ю.Мясников. Çакнашкал ĕç династийĕсен шучĕ малашне те ӳссех пытăрччĕ, ун пек чухне ял хуçалăхĕн малашлăхĕ чăнласах та çутă пулĕ.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**
С.ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕ

ХĂЙ ĔÇĔНЧЕ – ЧĂН ĂСТА

# Апат пĕçерекен пăсĕпех тăранать...

***Кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче кăна мар, маларах та, ун хыççăн та «Чăваш Ен» издательствăпа полиграфи комплексĕн столовăйĕнчен çын татăлма пĕлмест. Хаçатçăсемпе пичет ăстисемсĕр пуçне апатланмашкăн çывăхра вырнаçнă предприяти-организацире ĕçлекенсем, вĕренӳ заведенийĕсенче ăс пухакан çамрăксем çӳреççĕ. Ку тăрăхра апатлану çурчĕ çукран мар паллах.***

Столовăй ĕçченĕсем ырă кăмăллă та çепĕç чĕлхеллĕ, кашниех пултаруллă та хастар. Вĕсенчен пĕринпе, Ольга Васильевнăпа, хамăр вулакансене паллаштарасшăн.

Столовăй ертӳçи Нина Иванова палăртнă тăрăх – Ольга Васильевна пĕрремĕш блюдăсене те, иккĕмĕшĕсене те тутлă та тутлăхлă, клиентсен кăмăлне каймалла майлаштарма пултарать. Апатлану çуртĕнче корпоративăн тĕрлĕ уявĕ тăтăшах иртнĕ май смена хыççăн та пухăннă хăнасен кăмăлне çавăрас тесе тăрăшать. Чĕлхи-çăварĕ çыпăçуллă, калаçма ӳркенмест вăл. Сасси те уçă – юрлама ăста.

Ольга Игнатьева Вăрнар районĕнчи Шĕнер шкулĕнче вĕреннĕ чухнех повар пулас ĕмĕтпе çунатланнă. Паллах, сăлтавсăр мар. Амăшне кура хĕрĕ те пĕчĕклех вучах умне тăрса юрла-юрла апат пĕçернĕ.

«Повара вĕренмелле санăн», – ăс панă ашшĕ. Ара, тăвансен хушшинче апат янтăлама ăста çынсем пулман мар вĕт. Сăмахран, иккĕмĕш сыпăкри икĕ аппăшĕ, амăшĕн йăмăкĕ тĕрлĕ çулта Шупашкарти столовăйсене ертсе пынă, хула халăхне тутлă апат çитерсе савăнтарнă.



● *Ольга Игнатьева сĕнекен апат-çимĕç яланах тутлă та тутлăхлă.*

Çапла вара алла аттестат илнĕ хыççăн кулинари училищинче икĕ çул ăс пухнă, 4 разрядлă специалист пулса тăнă. Пурнăç çулне тĕп хулари 30-мĕш шкул столовăйĕнчен пуçланă. Çемье çавăрсан Сосновкăри садикре пĕчĕккисене апатлантарнă. Вунă çул каялла хваттер условийĕсене лайăхлатнă май пурăнмалли вырăна улăштарма тивнĕ. Унтанпа «Чăваш Ен» издательствăпа полиграфи комплексĕн столовăйĕ уншăн – иккĕмĕш кил.

«Мана кунта питĕ килĕшет. Производство предприятийĕн апатлану çуртне ача-пăча учрежденийĕннипе танлаштараймăн. Çитĕннисем валли урăхларах хатĕрлемелле, меню та расна – çавăнпа малтанхи вăхăтра çăмăлах пулмарĕ. Заведующи, ĕçтешсем пулăшса пынипе кунта та кĕске вăхăтрах хăнăхса çитрĕм», – тет Ольга Васильевна. Ăсталăха 5 разряда çити ӳстернĕ вăл.

Килен-каян столовăй апатне килĕштерет терĕмĕр. «Поварсем вара хăйсем янтăланине çиеççĕ–и?» – кăсăклантăм сăмах май.

«Епле-ха унсăрăн? Хамăр пĕçернĕ апат чи пахи шутланать. Анчах рехетленсе çисе лармашкăн вăхăт çук – çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтермелле. Ерçӳллĕ самант тупăнсан пĕрикĕ кашăк хыпса пăхнипех тăранатпăр. Смена вĕçленнĕ тĕле кăна хырăм хыр тăррине кайнине туйса илетпĕр. Апат пĕçерекен пăсĕпех тăранать тесе ахальтен каламан», – пытармасть апат-çимĕç ăсти.

Çак кунсенче Ольга Васильевна çуралнă кунне уявлать. Пирĕн валли куллен тутлă апат янтăланăшăн ăна чĕререн тав туса менелник ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, иксĕлми телей, ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Валентина СМИРНОВА.**
С.ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕ

# «Юхăм тĕллев палăртма пулăшрĕ...»

## Калининăри шкулта спортпа патриотлăх пĕр çыхăра

*Çĕршывра ГТО комплексĕн нормисене пурнăçламалли тытăма çĕнĕрен чĕртни – ырă пулăм. Район администрацийĕнче, вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕнче ĕçлекенсем ку енĕпе хăйсен вăй-хал çирĕплĕхне тĕрĕслерĕç ĕнтĕ.*

Калинино шкулне хăнана килнĕ офицерсем – патшалăх хăрушсăрлăх службин генерал-майорĕ Вячеслав Тихонов, Валерий Кошкин полковник тата Евгений Паршин подполковник, УФСБн Чăваш Республикинчи ветерансен канашĕн председателĕ Ардалион Павлов – тĕрĕслев упражненийĕсене пурнăçланă. Çак мероприяти спортпа патриотлăха пĕр тĕвве çыхнă. 7-мĕш класра вĕренекен Андрей Григорьев, спецназовецсен класĕн командирĕ, пурне те тĕлĕнтернĕ – турник çинче 12 хутчен туртăннă. Ытти ачасен те кăтартăвĕ япăх мар. Хăнасем вĕренекенсен умне каллех çĕнĕ тĕллев лартнă – тепре киличчен кăтартăва çĕнетмелле!



Ку шкулта ачасене патриот воспитанийĕ парассине çӳллĕ шая çĕкленĕ.

Акă Калинино шкулĕнчи çамрăк кадетсене, 8-мĕш класс ачисене, республикипех ăмсанаççĕ ахăртнех – хальтерех çеç Шупашкарта иртнĕ смотрпа строй конкурсĕнче вĕсем 20 команда хушшинче 1-мĕш вырăна тухнă. Умлă-хыçлă, виççĕмĕш хут.

Çĕнтерес туртăм çамрăксен чĕрисене çирĕп кĕрсе вырнаçнă. Наставникĕсен – директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн Галина Лукинан, класс ертӳçин тата хореографăн Надежда Тикиневăн тата ОБЖ учителĕн Лев Ефимовăн – сумлă ĕçĕ палăрать. Шкул коридорĕнче çакса хунă каларăша – «Итлени, вĕренни, дисциплина, тасалăх, сывлăх, хавхалану, хăюлăх, хастарлăх – çĕнтерӳ никĕсĕ» – ачасем хăйсен пурнăç девизĕ тунă.

Бал ташшине ирĕклĕ вĕçев тейĕн. Историе кунсерен шĕкĕлчеççĕ. Стройпа утса юрлассипе, Калашников автоматне сӳтсе пуçтарассипе те хăнăху пысăк. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем яланах малта.

Хамăр республикăран тухнă, халĕ Мускавра пурăнакан офицерсен «Сыны Отечества» пĕрлешĕвĕ йĕркелекен çак конкурсăн патриотлăх шайĕ çав тери пысăк. Шăпах çакнашкал çынсем çамрăк ăрăва çĕкленме пулăшаççĕ. «Эпĕ кадет класĕнче вĕреннипе мăнаçланатăп. Чăн-чăн патриотсем çитĕнтерме пулăшнăшăн офицерсен канашне чĕререн тав тăватăп. Çак юхăм мана хамăн пурнăç тĕллевне палăртма пулăшрĕ – эпĕ çар тухтăрĕ пуласшăн», – тет Дина Павлова, Калинино шкулĕнчи кадетсен аслă класĕн командирĕ.

Дина ертсе пынă аслă класс Чăваш Ен конкурсĕнче тăвата çул çĕнтерсе виçĕм çул Пĕтĕм Раççейри «Çĕнтерӳçĕсен маршне» хутшăннă. Çĕршыв шайĕнче тăваттăмĕш хут йĕркеленĕ тупăшура ял ачисем Мускаври шкулсенчи вунтăватă тата регионсенчи вунултă команда хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă, чăваш ятне Мускав таран çĕкленĕ. Кадетсен кĕçĕн класĕ Анатолий Иванович Григорьев ячĕпе хисепленет.

Калининăри вăтам шкул патриот воспитанийĕн кăтартуллă ĕçĕпе палăрать кăна мар, чи кирли – ачасен чунне хускатмаллине, вĕсене вăл е ку ĕçе, юхăма явăçтармаллине, ырă ĕçе çӳле çĕкленине кăтартать.

«Шкулăн пĕр тĕллев – çирĕп сывлăхлă, анлă тавракурăмлă ăру çитĕнтересси. Шкултан кашни ача чăн-чăн çын пулса тухтăр, çĕршыва юрăхлă пултăр. Çакнашкал юхăм йĕркелени, конкурссене хутшăнни вĕсенче патриотлăх туйăмне уйрăмах вăйлă аталантарать», – палăртать шкул директорĕ Татьяна Ефимова.

**Светлана ЧИКМЯКОВА.**
Вăрнар районĕ.
Автор сăнӳкерчĕкĕ

02 СЛУЖБА

# Пирĕн класра хăнара – полицейскисем

***Сĕтел çинчи хĕç-пăшалăн тем тĕрлĕ тĕслĕхне курсан класа кĕнĕ ачасен çăварĕсем карăлсах кайрĕç. Арçын ачасен – пушшех! Теттесем мар – чăн хĕç-пăшал вĕт! Кашниех ăна та кăна тытса пăхасшăн: пĕри йывăр пулемета пахалать, тепри пистолетпа тĕллет, виççĕмĕшĕ снайпер винтовкине тĕпчет...***

Вулакансенчен хăшĕ-пĕри çакăнта темле «милитари» сĕмне те шырама пăхĕ. Вĕсене тӳрех лăплантарас килет: ачасем полици арсеналĕнчи хĕç-пăшалпа паллашнинче ним япăххине те асăрхамарăм. Тĕрĕссипе, хамшăн та интереслĕ пулчĕ. Çарта пулнă май, чăннипе, икĕ çул алăран автомат яман темелле, çапах ачасене кăтартма илсе килнĕ хĕç-пăшал пур пĕр кăсăклантарчĕ. Ытла та хăйне евĕрлĕ тĕслĕхсем-çке: сасăсăр перекен «Вал», «Кедр» пистолет-пулеметсем, револьвер йышши гранатомет, «Печенег» пулемет, снайпер винтовки тата ыт. те. Пытармастăп, хăшне-пĕрне тытса сăн та класран класа куçса вĕсен ĕçĕпе тĕплĕн паллашрĕç. ШĔМĕн экспертизăпа криминалистика центрĕн ĕçĕ çинчен, сăмахран, аслă эксперт Александра Егорова каласа пачĕ. Унăн эксперт чăматанĕнчи хатĕрсем преступлени пулнă вырăнти курăнман йĕрсене те асăрхама май параççĕ. Çак тĕлпулу хыççăн ачасен хушшинче эксперт пулас кăмăллисем тем тесен те тупăнаççех. Экспертсене ăçта вĕрентсе хатĕрленипе ахальтен кăсăкланмарĕç пуль.

Тепĕр класа вара ПАИ сотрудникĕсем йышăннă. Кунта та интересли нумай. Калăпăр, преступниксен е çул-йĕр правилисене пăсакансен автомобильне чармалли йĕплĕ хатĕр. Ăна çул урлă тăсса хураççĕ те – нимĕнле машина та иртсе каяймĕ. Вĕçлеке «шăлсем» кустăрмасем шăтараççĕ вĕт, пушă резинăпа вара инçе каяймăн. Кусем тата мĕнле приборсем? «Арена» – çул-йĕр правилисене пăснине асăрхать, «Визир» вара автомобильсен хăвăртлăхне виçет», – ăнлантарать ПАИн пропаганда уйрăмĕн инспекторĕ Гульзия Баннова. Ачасене алкотестера вĕрсе пăхма та ирĕк пачĕç. Прибор çын эрех ĕçнине е ĕçменнине кăтарттăр тесен вăйлă вĕрмелле – шăпăрлансен сывлăш хăвачĕ те çитмест. Ушкăнри чи ӳкерттертĕм. Ачапчалла хăтлану пуль-ха та, çапах...



● *«К» пайран нимĕн те пытараймăн.*

> ## ✓ УНТАН «СЦЕНА» ÇИНЕ ОМОН ТУХРĔ. БРОНЬЛАНĂ АВТОМОБИЛЬ, АВТОМАТСЕМ ТАТТИ-СЫППИСĔР ШАТĂРТАТНИ – КАРТИШЕ ТĔТĔМ КАРСА ИЛЧĔ

ШĔМĕн общество канашĕ пуçарнипе полици çак кунсенче Шупашкарти 5-мĕш гимназире «Класс полицейскийĕ» акци ирттерчĕ. Йĕркелӳçĕсен шухăшĕпе – çак ĕç çитĕнекен ăрăва йĕркелĕх хуралĕнчи службăпа çывăхрах паллашма кăна мар, ачасене хăрушсăрлăха уямашкăн вĕренме те пулăшĕ. Усăллă пуласси пирки иккĕленӳ çук. Шăпах çак акци программипе килĕшӳллĕн СОБР кунта хăйĕн хĕç-пăшалне ачасене кăтартма илсе килнĕ. Спецназ представителĕсем хĕç-пăшалăн кашни тĕслĕхĕпе камсем, мĕнле лару-тăрура усă курни çинчен тĕплĕн каласа пачĕç. Анчах Шалти ĕçсен министерстви çакăнпа кăна çырлахман: гимназие министерствăн тĕрлĕ енĕпе ĕçлекен нумай подразделенийĕн представителĕсем килнĕ. Пурин те шăпăрлансене каласа памалли, кăтартмалли пайтах.



● *«Эпĕ снайпер пулатăп!»*

Кашни подразделени пĕр класс йышăннă. Ачасен ушкăнĕсем вара тĕрекли вĕрчĕ те – тинех кирлĕ цифрăсем курăнса кайрĕç. «Ӳсĕр мар!» – шӳтлерĕ инспектор.

Юнашарах – уголовлă шырав управленийĕн пуçлăхĕн çумĕн Вадим Екунинăн «йышăну пӳлĕмĕ». Вăл оперативник профессийĕн вăрттăнлăхĕсене уçса пачĕ. Кăткăс темле преступленипе те ĕçленĕ те – ачасем пайăр тĕслĕхсемпе те кăсăкланчĕç. ШĔМĕн «К» пайĕ пирки те çавнах каламалла. Унăн пуçлăхĕн çумĕ Валерий Чернов илсе килнĕ япаласем авă шпионсем усă куракан хатĕрсене аса илтереççĕ. Тепĕр тесен – аса илтереççĕ кăна мар, вĕсен хушшинче преступниксенчен туртса илнисем те пур. Сăмахран, ахаль вешалка кăна – унта вара вăрттăн пĕчĕк видеокамера вырнаçтарнă иккен. Авторучка та – çавнашкал «куçлăскерех». Валерий Владимирович палăртнă тăрăх – кунашкал япаласене туянма, вĕсемпе усă курма юрамасть, çакăншăн уголовлă йĕркепе явап тыттараççĕ. Тепĕр тесен преступниксем паян пысăк технологисене çине тăрсах алла илеççĕ. Тем тĕрлĕ хатĕрпе те хĕç-пăшалланаççĕ. Акă вĕсем: банк карточкин кăтартăвĕсене «вăрлакан» скиммерсем, микрочипсем тата ыт. те.

ШĔМ музейĕн экспозицине те илсе килнĕ. Музей пуян – 2,5 пин экспонат патнелле, пĕтĕмпех турттарса çӳреймĕн, çапах гимназие илсе килнĕ экспозицире те курмалли-тĕлĕнмелли нумай. Экспонатсенчен чылайăшĕ – ĕлĕкхисем, шырав йĕркеленĕ май тупнăскерсем. Сăмахран, нимĕç тата совет салтакĕсен каскисем. Вĕсене Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче çапăçусем пынă вырăнсенче тупнă. Тутăхнăскерсене ачасем танлаштарса та пăхрĕç. Нимĕçсен самай йывăртарах иккен, эппин, вăл хӳтлĕх енĕпе те çирĕпрех пулнă. Е тата – салтаксем усă курнă пĕчĕк кĕреçесем. Пирĕн – пысăкрах, фашистсен çарĕнчи – пĕчĕкрех, ун чухнех хуçланаканнипе усă курнă, çавна май вăл, паллах, меллĕрех те пулнă. Ку вара – вăрçă вăхăтĕнчи кашăк. Ăна пирĕн салтаксем ӳкнĕ самолетăн алюмини шăвăçĕнчен ăсталанă.

Ачасем акци кунĕнче курнилтнине туллин çырса кăтартас тăк хаçат страницин ытла та пысăк лаптăкĕ кирлĕ пулĕччĕ. Тепĕр тесен ШĔМ çакнашкал акцие йăлана кĕртесшĕн, ытти шкула та çитĕç, çавна май ачасем пĕтĕмпех хăйсен куçĕпе курĕç. Апла пулин те пĕр саманта палăртса хăвармаллах. Юлашкинчен пурте гимнази картишне тухрĕç. Кунта полици тытăмĕнчи кинологсем хăйсен хӳреллĕ ĕçтешĕсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. «Буян» овчарка – чăннипех харсăр йытă. Хĕç-пăшаллă «преступник» çине сиксе ларчĕ те – лешĕ темле тапкалансан та ăна вĕçертмерĕ. «Ялта» кокер-спаниель вара тĕрлĕ наркотик шырама ăста – дрессировка енĕпе тĕлĕнтернĕскере ачасем кăна мар, вĕрентекенсем те алă çупса тав турĕç.

Унтан «сцена» çине ОМОН тухрĕ. Броньăланă автомобиль, автоматсем татти-сыпписĕр шатăртатни – картише тĕтĕм карса илчĕ. Полицейскисем алă вĕççĕн тытăçмалли мелсене ĕненмелле кăтартрĕç. Каллех пурте алă çупаççĕ!



● *«Буян» вĕçертмест!*

**Николай КОНОВАЛОВ**
Автор сăнӳкерчĕкĕсем

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

РЕСПУБЛИКА ТУЛАШĔНЧЕН КИЛНĔ ÇЫРУ

# Туслăх çулĕ такăрланать

***Волгоград облаçĕнчи Камышин хулипе районĕ сирĕн республикăри Йĕпреç районĕпе туслă çыхăну тытма тытăннăранпа пилĕк çул иртрĕ. Çак тапхăрта вĕсем пĕр-пĕрин патĕнче темиçе те пулма ĕлкĕрчĕç. Камышинсен делегацийĕн йышĕнче эпĕ те икĕ çул каялла Пучинкери «Камай уйĕн урхамахĕ» ятпа иртекен хресчен лашисен турнирĕнче пулнăччĕ.***



Çавăн чухне чăвашсем ĕç выльăхĕсене хисепе хурса хакланине курса тĕлĕннĕччĕ. Чăваш салипе юнашарах вырнаçнă ем-ешĕл улăхра çав кун каç пуличченех тăванлăхпа туслăх концерчĕ пычĕ. Халăх таланчĕсемпе пĕрлех мана та сцена çине тухма, йышлă халăх умĕнче Григорий Пономаренко композиторпа Маргарита Агашина поэт çырнă «Растет в Волгограде береза» юрра шăрантарма тиврĕ.

Ку юрра авторĕсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче паттăррăн çапăçса пуç хунă салтаксене халалланă. Сталинграда нимĕçсен чуринчен ирĕке кăларма пирĕн çĕршыври нумай нациллĕ халăхсен ывăлĕ-хĕрĕ хутшăннă, вĕсен хушшинче вара чăвашсем те сахал мар пулнă. Сăмаха вăрçă çине çитертĕмĕр пулсан çакна пайăррăн асăнса иртни вырăнлă пулĕ: Тăван çĕршыв вут-çулăмра çуннă чухне Чăваш çĕршывĕ, унăн тĕлĕнмелле ырă кĕтесĕ – Йĕпреç çĕрĕ – пирĕн мухтавлă кăйкăра, аманнă хыççăн икĕ урасăр юлнă Алексей Маресьева тараватлăн йышăннă. Фронт çывăхĕнчен кунта куçарса килнĕ вĕçев шкулĕнче пулас Совет Союзĕн Геройĕ иккĕмĕш хут вĕçме хăнăху илнĕ. Алексей Маресьев Камышин хулинче çуралса ӳснĕ. Пире Чăваш Республикипе тата Йĕпреç районĕпе туслă çыхăну йĕркелесе яма пулăшас ĕçре легендăна кĕрсе юлнă вĕçевçĕ калама çук пысăк вырăн йышăнать.

Камышин хулинчи историпе тавра пĕлӳ музейĕнче халĕ Алексей Маресьевăн паттăрлăхне сăнлакан кĕтес пур, икĕ çул каялла вăл «чăн-чăн этем» Йĕпреç поселокĕнче пурăннă вăхăта çутатса паракан документсемпе пуянланчĕ. Куншăн эпир чи малтан Йĕпреçри этнографи музейĕн директорне Александр Майорова тата педагогика ĕçĕн ветеранне, Маресьевăн Чăваш çĕрĕ çинчи пурнăçне тĕплĕн тĕпченĕ Нарспи Васильева тавра пĕлӳçе чун-чĕререн тав сăмахĕ калатпăр. Вĕсемех пире Борис Полевойăн Чăваш кĕнеке издательствинче пичетленсе тухнă «Чăн-чăн этем çинчен çырнă повеçне», Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев чăвашла куçарнă кăларăма парнелерĕç.

Тепĕр икĕ çултан Алексей Маресьев çуралнăранпа 100 çул çитет. Эпир юбилее хатĕрленме тытăнтăмăр та ĕнтĕ. Камышин хулипе районĕнчи шкулсенче Паттăрлăх урокĕсем, культура учрежденийĕсенче çарпа патриот юррисен фестивалĕ иртĕç, вĕренекенсем Çĕнтерĕве çывхартассишĕн пурнăçĕсене шеллемесĕр кĕрешнĕ ентешĕсем çинчен çырнă сочиненисен конкурсне хутшăнĕç. Вулакансем çакна та пĕлччĕр: Камышин çĕрĕ Тăван çĕршыва Маресьевсăр пуçне тата Совет Союзĕн виçĕ Геройне панă – И.Ф.Базаровпа И.А.Лазарев тата Н.П.Дякин кăтартнă паттăрлăх çинчен пирĕн тăрăхри кашни çынах лайăх пĕлет.

... Йĕпреçсем Алексей Маресьев ятне чыслăн упрани район центрĕнчи тĕп урам ун ячĕпе хисепленни, вăл пурăннă çурт çине Асăну хăми çакни мана савăнтарчĕ. Вăрçă паттăрĕн таса сăнарĕ пире ӳлĕмрен те туслăх çулне такăрлатсах тăмаллине ас тутарĕ.

■ **Анна ДЕРЯБИНА,**

**Камышин муниципалитет районĕн культура пайĕн пуçлăхĕ.**

Волгоград облаçĕ.

ЧĂН-ЧĂН ЕРТӲÇĔ

# Ушкăнпа ĕç ăнать

***Аслă Чемен ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Г.Медведевпа вырăнти хăй тытăмлăхăн «ĕнси» çинче капланнă ыйтусене хускатнă май 487 хуçалăхлă тăрăха урлă та, тăрăх та шĕкĕлчесе тухрăмăр. Ертӳçĕ сăмахĕсем вара пурте вырăнти халăхпа, унăн пурнăçĕпе, малашлăхĕпе çыхăннă. Шел, калаçу пуçламăшĕнчех муниципалитет йĕркеленĕвĕнчи Тури Чакăпа Аслă Чементе 83 çурт хупăнни çинчен пĕлтерни шухăша ячĕ. Ултă пайĕнчен пĕринче çын пурăнмасть! Йыш сахалланса, çулĕпе ватăлса пырать. Çапах та пуçлăхăн хастарлăхĕ пысăк пулсан, ваттисем калашле, халăх сурнипе кӳлĕ çеç мар, ытти те тăвăнать. Чылай чухне хыснара кĕмĕл çукки çине йăвантарнине пăхмасăрах кун-çул таппипе тан утса пыма пултарнине Гаврил Федоровичпа калаçнă вăхăтра тепĕр хут ĕнентĕм.***

Г.Медведев ял тăрăхĕ спортри çитĕнӳсемпе кăтартуллисен хушшинче пулнине çирĕплетрĕ: чупассипе те, шывра ишессипе те, волейболла ăста выляссипе тата ыттипе те вĕсем никамран ытларах Нăрваш Шăхальсен вăйлă командинчен çеç шикленеççĕ-мĕн. Ыттисене пур енĕпе те çăмăллăнах парăнтарма пултараççĕ. Ял тăрăхĕн чысне хӳтĕлекенсен хушшинче çамрăкки çеç мар, çулĕпе асли те, нумай ачалли те пур. Ку тĕлĕшпе вырăнти «халăх тарçисем» ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăтăшах спорт мероприятийĕсене хутшăнни паха. В.Бахмисов, С.Вахмисов, П.Япаров, А.Фролова ячĕсене кашни ăмăртурах илтме пулать. Н.Зотовăпа А.Абрамов студентсем, нумай ачаллă амăшĕ Е.Капитонова команда чысне тăтăшах хӳтĕлеççĕ. Кăçал Шупашкар хулин кунĕнче Аслă Чеменсем ăмăртусене хастар хутшăнса çĕнтерӳпе таврăнни те кăмăллă. Физкультурăпа спорт вара çынсен сывлăхне тĕреклетеççĕ, кун-çулне вăрăмлатаççĕ. Çак шухăша Шупашкарта йĕркеленĕ спорт форумĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та пĕрре мар çирĕплетрĕ.

Районти чылай ял тăрăхĕ Культура çулталăкне мĕнпе те пулин асра хăварма тăрăшрĕ. Кун пирки калаçу пуçарсан Гаврил Федорович тӳрех хăйĕн шухăшне пĕтĕмлетсе: «Пирĕншĕн кашни çулах Культура çулталăкĕ...» – терĕ кăмăллăн. Кăна, паллах, хирĕçлеме çук. Аслă Чементи ансамбль членĕсем – чĕрĕ музей экспоначĕсем тесен те йăнăш мар. Кирек мĕнле ĕлĕкхи уява та вĕсем шухăшласа кăларса мар, чăнчăнах, асатте-асаннесен вăхăтĕнчи йăла-йĕркепе, тумĕ-çипуçĕпе кăтартса параççĕ.

Çитес çул Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарать. Çак тăрăхран çĕршыва хӳтĕлеме вăрçă хирне 215 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 116-шĕ пуç хунă. Паттăрсене асăнса лартнă палăка уяв тĕлне капăрлатса сăн кĕртесси, ун таврашне илемлетесси администрацин ĕç планĕнче малтанхи йĕркесенчех çырăннă. Ял тăрăхĕнче пурăнакан пĕр вăрçă ветеранĕ çеç юлнă. Çапах та Тăван çĕршыв историйĕнче тарăн йĕр хăварнă вăрçă паттăрĕсен палăкне кирлĕ пек пăхса тăрасси ял тăрăхĕн тивĕçех. Вăл малашне те çаплах пулĕ. Ял тăрăхĕнче Афганистанра, Чечня Республикинче çар тивĕçне пурнăçланисем те пур. Интернационалистсене халалласа чиркӳ çумĕнче кăçал аллея уçнă. Кĕркунне кунта 30 ытла кăвак чăрăш лартнă. Çывăх çулсенче вара ял халăхне канма хăтлă парк уçасшăн. Ырă ĕçĕн хастарĕсем тупăнаççех.

Районти чылай ял тăрăхĕнче общество пурнăçĕшĕн кар тăракан староста çук. Пур пулсан та унăн тивĕçне депутатсем çине тиенĕ. Аслă Чемен ял тăрăхĕнче вара халăх суйланă çак çынсем шăпах ял пуçлăхĕн сылтăм алли. Халăхпа çыхăнтаракан общественниксемех яла тирпей-илем кĕртме те, урамсенчи çулсене тикĕслеме те, хуçалăхран тухакан çӳп-çапа тирпейлесе ăсатма та ĕлкĕреççĕ. Л.Тимошкинăпа В.Михайлова, Н.Абрамов старостăсем, сăмахран, хăйсен округĕнчи çула тирпейлес тесе чылай ĕç тунă. А.Семенов, П.Иванов, В.Тимошкин техникăпа пулăшнă. Тури Чакăра та çак меслетпех хăш-пĕр урама йĕркене кĕртнĕ. Н.Софроновпа Б.Бахмисов вак чул турттарнă, ял хастарĕсем вара ăна сапаланă. Ĕлĕкхилле, нимелле ĕçлесех вăхăтлăха кĕме-тухма çул тунă. Малашне администраци вĕсене хăй вăйĕпе тата тирпейлĕрех тума шухăшлать.

■ **Альбина ЕГОРОВА.**

Патăрьел районĕ

СЪЕЗД

# Чăнлăхпа тӳр килтĕр

***Пĕтĕм Раççейри Вырăнти хăй тытăмлăх канашĕн V съездĕнче муниципалитет йĕркеленĕвĕсенчи, хула округĕсенчи тата ял тăрăхĕсенчи влаç тытăмне реформăланин малтанхи пĕтĕмлетĕвне тишкернĕ. Кунсăр пуçне съездра вырăнти хăй тытăмлăх аталанăвĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе явнă, Канашăн çĕнĕ председательне суйланă. Малашне унăн ĕç-хĕлне Самар хулин пуçлăхĕ Дмитрий Азаров йĕркелесе ертсе пырĕ.***

Съезда Чăваш Ен делегацийĕ те хутшăннă. Йышра – Чăваш Республикинчи Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев, Канаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Владислав Софронов тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Генрих Васильев.

Станислав Николаев пирĕн корреспондента пĕлтернĕ тăрăх – Канаш вырăнти хăй тытăмлăха çĕнетсе лайăхлатассине пысăк тӳпе хывнă, çĕнĕ саккунсем кăларма пуçарусен чылай пакетне хатĕрленĕ, социологи ыйтăмĕсем ирттернĕ тата ытти те. Обществăшăн пĕлтерĕшлĕ хăшпĕр проекта пурнăçа кĕртни территорисен социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕнче пухнă опытпа пĕр-пĕрне паллаштарма май панă.

Раççей ертӳлĕхĕ общество организацине шанни Владимир Путин Президент ĕç тăвакан влаç тытăмне çĕнетсе лайăхлатма, муниципалитет полномочийĕсене йĕркене кĕртсе тивĕçлипе «валеçме», тăкак обязательствисене пурнăçри чăнлăхпа тӳр килтерме сĕнни те аван çирĕплетет.

Анчах умра пурнăça кĕртмелли татах та нумай: çынсен вырăнти влаçа мĕнле йĕркелемеллине, вăл хăш ыйтусемпе ĕçлемеллине хăйсен татса памалла. Пирĕн пек нумай енлĕ, тĕрлĕ нациллĕ çĕршывра вырăнти влаçа ертсе пырасси нумай вариантлă, кашни субъектăн хăйĕн енĕ пур-çке, пулмалла та. Муниципалитет влаçне çĕнетсе йĕркеленĕ чухне çакна яланах асра тытмалла. Сентябрь уйăхĕнче Раççей территорийĕнче ăнăçлă иртнĕ хушма суйлав федерацин 136-ФЗ саккунне кĕртнĕ улшăнусемпе хушăмсем тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕç.

■ **Ю.ПЕТРОВ**

# Пĕр ялтан теприне — çĕнĕ кĕперпе

Мăн Шетмĕ юхан шывĕ урлă Анатри Типçырмаран Кушкăна каçмалли кĕпере хĕрлĕ хăю касса уçрĕç.

Çакăнта 40 киллĕ, 130 çынна яхăн пурăнакан ялти Геннадий Сверчков, Рена Маркова ял старости, Виктор Владимиров, Влас Дмитриев, Тамарăпа Виктор Тимофеевсем, ытти хастар маттур пулчĕç. Кĕпере хăвăртрах хута ярас тĕллевпе Анатри Типçырмасем килĕрен 300-шер тенкĕ пуçтарнă.

**Виктор ДАНИЛОВ.**

Красноармейски районĕ.

# Каччăсем каяççĕ салтака

Ят тухнă каччăсене ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем, юлташĕсем çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлама пил парса çар хĕсметне ăсатаççĕ. Канаш хулипе районĕнчи призывниксемпе, инçе çула тухиччен, влаç тытăмĕнче ĕçлекенсем тĕл пулнă. Хула призыв комиссийĕн председателĕ, администраци пуçлăхĕ Людмила Иванова хальхинче те çар тумне тăхăнма хатĕрленекенсемпе тата вĕсен çывăх çыннисемпе ăшпиллĕ тĕлпулу йĕркеленĕ. Унта тĕрлĕ вăхăтра юнлă хирĕçтăрусенче çапăçнисем те хутшăннă. Тĕлпулура Канаш хулинче пурăнакан Виталий Григорьева «Афганистанри çапăçусем вĕçленнĕренпе – 25 çул» юбилей медалĕпе наградăланă.

– Кĕрхи призывра çара ăсатмалли план ăнăçлă пурнăçланать, – тенĕ пирĕн корреспондента Канаш хулин, Канаш тата Тăвай районĕсен çар комиссарĕ Юрий Барышов подполковник. – Ĕнерхи кун тĕлне 99 призывник çар хĕсмечĕн вырăнне тухса кайнă. Службăна ăсатма палăртнă 101 çамрăкран 60-шĕ – Канаш хулинчен. Хальтерех Мускаври Президент полкне 15 призывника савăнăçлă лару-тăрура ăсатрĕç. Ку йышра Канашсем те пур.

■ **Ю.СТЕПАНОВ**

● ➡ *12 стр.*

**ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ**

# Космонавт пилĕ

***...Çирĕм икĕ çул хыçа юлчĕ ĕнтĕ унтанпа, Пучинке салипе Çирĕклĕ ялĕ хушшинчи тĕремлĕхре çĕнĕ урам ÿссе ларнăранпа. Çак тапхăрта унта капмар та хÿхĕм çурт-йĕр çавăракансен йышĕ икĕ хут пысăкланнине савăк кăмăл-туйăмпа палăртать иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче «Красный партизан» колхозăн строительство цехне ертсе пынă Анатолий Петров.***

– Пирĕн строительсем канăçа пĕлмесĕр ĕçлетчĕç. Пĕр çуртне купаласа пĕтернĕ çĕре тепĕр проект хатĕрччĕ. Тĕп ялта çамрăк çемьесен шучĕ çултан-çул йышланса пынине кура колхоз правленийĕпе Пучинке ял канашĕн администрацийĕ çак вырăнта уйрăлса тухакансене çĕр лаптăкĕсем валеçсе пама йышăнчĕ те, – терĕ Анатолий Иванович.

Çĕнĕ урамра чи малтан çурт лартнă Валерий Асановпа Николай Клементьев тата Федор Шибаевпа Александр Петров, Анатолий Сергеев çамрăксен тĕслĕхĕ ыттисене те ырă витĕм кÿнĕ пулас – темиçе çул хушшинче урам Çирĕклĕ ялĕ еннелле туртăнса, тăсăлса пычĕ, паян-ыран тенĕ пек вăл асăннă ялпа пĕрлешет. Эпир паян çак урам пирки çырас та çукчĕ пулĕ, анчах алла калем тытма хистекен пĕр сăлтав тупăнчĕ. Çавна вулакансен умне кăларма пире Пучинке ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Федоров /сăмах май, вăл хăй те çак урамрах çурт çавăрнă/ пулăшрĕ.

«Пĕр вунă çула яхăнах çĕнĕ саманара çуралнă урам «Çĕнĕ урам» ятпа «пурăнчĕ», – терĕ Николай Петрович. – Чăн та, хамăр хушăра ăна шÿтлерехххĕн «Санта-Барбара» урамĕ теттĕмĕр. Ара, çав çулсенче «Сенкер экран» кашни каçах пире Бразили телесериалне курма чĕнетчĕ-çке.

Пĕррехинче Пучинке салине хамăрăн мухтавлă ентешĕмĕр, çăлтăрсемпе икĕ хутчен чăвашла калаçнă Андриян Николаев килнĕччĕ. Ун чухне ăна Раççей Федерацийĕн Аслă Канашне депутата суйлама кандидата тăратнă. Андриян Николаев çав кун пирĕн тăрăхра чылай вăхăтах пулчĕ. Суйлавçăсемпе ирттернĕ темиçе тĕлпулу вăхăтĕнче унăн калаçăвĕ таçта та çитрĕ: хăй çинчен те, тĕнче уçлăхĕнчен Çĕр-аннемĕр еплерех курăнни çинчен те, çĕнĕ космонавтсем хатĕрлесси мĕнлерех пыни çинчен те чăн чăвашла уççăн та тĕплĕн каласа пачĕ тыр-пул ÿстерекенсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансене, педагогсемпе шкулта вĕренекенсене. Çавăн чухне виççĕмĕш космонавт хайхи Çĕнĕ урама та çитсе курчĕ, хăш-пĕр çемье мĕнлерех пурăннипе паллашас шухăшпа вĕсен килĕсене кĕрсе те тухрĕ. Пĕлетĕр-и, шăпах çавăн чухне йышăнтăмăр та эпир çĕнĕ урама Андриян Николаев ятне пама. Сăпайлăха пĕрремĕш вырăна хуракан генерал-майор ку хутĕнче пире хирĕçлесе нимĕн те каламарĕ ун чухне, ĕмĕрĕнче чап-мухтав кăшăлне тасан та тÿррĕн йăтса пыма хăнăхнăскер кулкаласа тăчĕ çеç. «Халăхăн шухăш-кăмăлĕ пĕрешкел тĕк эпĕ ăна хирĕç кайма пултараймăп», – терĕ кăна юлашкинчен...

Андриян Николаев кайран та пĕрре кăна пулман Пучинкере. Вăл районти чи пысăк салана килсе çÿресси тепĕр сăлтавпа та çыхăннă. Пучинкере унăн çывăх тăванĕ, амăшĕн йăмăкĕн ывăлĕ Владимир Михайлович Козин пурăннă. Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчен Чăваш Хум хĕррине килсе лекнĕшĕн «айăпли» – юрату: Владимир Козин Пучинке пикине пĕрре курнипех юратса пăрахнă та унпа çемье çавăрма çирĕп тĕллев тытнă. Зоя вара ăна ниçта та мар, тăван тăрăхне йыхравланă. «Пире кăвакарчăнсем пек килĕштерсе пурăнма Андриян Григорьевич хăй пил панă», – аса илетчĕ çав вăхăт пирки Владимир Михайлович. Хăйĕн çывăх тăванĕ пекех, Козин маттур та хастарччĕ. Йĕпреç тăрăхне килнĕ-килменех район ертÿлĕхĕ ăна вăрманта вырнаçнă «Березовка» колхоз тилхепине шанса панăччĕ. Кая юлнă хуçалăха малтисен йышне тăратнăччĕ вăл. Кайран, урăх вырăна куçсан, Хурăнлăхсем те ÿсĕм-çитĕнÿ çулĕпе тек малалла каяймарĕç, вĕсен колхозĕ панкрута тухса саланса кайрĕ.

Вăхăт питĕ хĕрхенÿсĕр. Шел, космонавтăн çывăх тăванĕ те халь пирĕн хушăра çук ĕнтĕ. Иртнĕ çулхи çу уйăхĕнче Пучинкесем Владимир Козина юлашки çула ăсатрĕç.

...Эпир вара каллех Пучинкери Андриян Николаев ячĕллĕ урам патне таврăнар-ха. Кунта «Красный партизан» колхоз чыс-чыме çÿле çĕклекенсем тĕпленнĕ. Вĕсенчен пĕри – Федор Шибаев вырмаçă. «Андриян Григорьевич пирĕн килте те пулнă, – аса илет паян районти комбайнерсен тупăшăвĕнче малти вырăнсенчен пĕрне тытса пыракан Федор Михайлович. – Кашни çулхи пĕтĕмлетÿсем тăрăх çĕнтерÿçĕсен йышне тăратăп. Мана кам хавхалантарать-ха? Виççĕмĕш космонавтăн пилĕ, вăл хама çĕнĕ çитĕнÿсем тума сунса тараватлăн та ăшпиллĕн хăйĕн аллине пани. Мĕн паян кунччен туйса тăратăп ун ăшшине...»

Статьяна вĕçленĕ май тепĕр самант çинче те чарăнса тăрамха. Сентябрь уйăхĕн 6-мĕшĕнче Пучинке салин аэродромĕнче çамрăк авиаторсен, çăмăл çунатлă самолетсемпе вĕçекенсен регионсен хушшинчи слечĕ иртрĕ. Унта хутшăнма Чăваш çĕршывĕнчен кăна мар – Мускавран, Санкт-Петербургран, Самартан, Чулхуларан, Хусантан, Йошкар-Оларан тата ытти çĕртен вĕçевçĕсем йышлăн килчĕç. Слета Андриян Николаев çуралнăранпа 85 çул çитнине халалланă. Çакна палăртса хăварма уйрăмах кăмăллă: кăвак тÿпене çĕкленекенсем колхозăн аэродромне çул тытнă чух Пучинкери Андриян Николаев ячĕллĕ урам витĕр тухрĕç...

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ.**
Йĕпреç районĕ

ДЕПУТАТ ТАТА УНĂН ĔÇĔ-ХĔЛĔ

# Яланах халăх хушшинче

***Чатукасси ялĕнче пурăнакан В.Егоров – «Васкавлă пулăшу» уйрăмĕн фельдшерĕ, ял старости, пушар тата ирĕклĕ халăх дружинисен членĕ. Кунсăр пуçне Виталий Александрович район Пухăвĕн депутачĕ те. Яланах халăх хушшинче вăл. Депутат ĕç-хĕлĕ, тĕпрен илсен, вырăнти влаçпа общественноç хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси, халăх çĕкленĕ ыйтусене татса парасси тата çакăн пирки çынсене пĕлтерсе тăрасси тесе шухăшлать В.Егоров.***



● *В.А.Егоров депутат.*

– Акă ял тăрăхĕн администрацийĕ çумĕнче профилактика, общественноç, ветерансен, хĕрарăмсен, çамрăксен канашĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсен ларăвĕсене хутшăнма тăрăшатăп – ял çыннисен нуши-терчĕпе ыйтăвĕсене тата та аванрах пĕлетĕп. Çавăн пекех кашни уйăхăн виççĕмĕш эрнекунĕнче çынсене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнатăп. Чăн та, нумайăшах пымаççĕ, çапах та хастарлăхпа палăракансем пур. Гражданcен пухăвĕсемпе конференцийĕсене хутшăнма çине тăратăп, ял-йыш çĕклекен ыйтусене вара вырăнти администрацие пĕрле татса пама тăрăшатăп, – тет депутат.

Виталий Александрович ял тăрăхĕнче пурăнакансене вырăнти ыйтусене татса парасси вырăнти влаçпа халăхăн пĕрлехи ĕçĕ пулса тăнине ăнлантарса парассине те тĕпе хурать. 2010-2014 çулсенче, калăпăр, çавна май ялсемпе урамсене тирпей-илем кĕртессипе пысăк ĕç тунă. Культурăпа спорт мероприятийĕ чылай йĕркеленĕ. Акă пĕлтĕр ентешĕ – чăвашсен мухтавлă композиторĕ Ф.Лукин çуралнăранпа 100 çул çитнине халаллаca, пĕлтерĕшлĕ уяв тата район кунĕ пулчĕç.

В.Егоров депутат хутшăннипе тăвакан ĕç чăннипех те сахал мар Чатукасси ял тăрăхĕнче. Обществăри йĕркелĕхе сыхлассине çирĕплетес тĕллевпе участокри полици пунктне уçрĕç. Профилактика ĕçне йĕркелесе пыма çакăн хыççăн условисем лайăхланчĕç.

– Чатукассисем йĕпе-сапара Тĕп урама сĕт турттаракан автомашина кĕрсе тухайманни, çынсен тулли витресемпе бидонсене ялăн тепĕр вĕçне çитиччен çĕклеме тивни пирки ÿпкелешсе пĕлтеретчĕç. Гражданcен пухăвĕнче кунти çула вак кирпĕчрен сарма калаçса килĕшрĕмĕр. Халăхпа пĕрле 400 метр тăршшĕ сартăмăр ăна. Чăн та, çакă ыйтăва вăхăтлăх татса пани кăна-ха. Ял тăрăхĕн администрацийĕнче çул тума экспертиза витĕр тухнă проект та пур, анчах вырăнти бюджет укçа-тенкĕрен хĕсĕкрех, – пĕлтерет В.Егоров.

Депутат пушар хăрушсăрлăхне йĕркелесси те çивĕч ыйтусенчен пĕри тесе палăртать. Апла пулсан Чатукассисен ЗИЛ-131 никĕсĕ çинче вырнаçтарнă АРС 14 пушар машинине йĕркеллĕ тытса тăрасчĕ, мотопомпăсене те тивĕçлипе упрасчĕ.

– Халăх сывлăхне сыхлассине лайăхлатас тĕлĕшпе ялти пĕтĕмĕшле практика врач офисĕнче «Васкавлă пулăшу» машини, аптека çукки ура хурать. Ĕç графикне те çирĕппĕн пăхăнмалла, – каласа парать Виталий Александрович.

Хăй ку тытăмра вăй хунăран унти лару-тăрăва вăл питех те лайăх пĕлет. Депутатăн кун йĕркинче – урамсене кĕркуннехи-çуркуннехи тапхăрта çутатса тăрасси /датчиксем вырнаçтарса тĕплĕн шута илесси/, ялсене ĕçмелли таса шывпа тивĕçтересси /пăрăхсем кивелнĕ, унсăр пуçне Çĕнĕ Выççăлкăра артезиан шывĕпе усă кураймаççĕ/, шкул çулĕччен ушкăнра вырăнсем сахалтараххи, культура пурнăçне чĕрĕлĕх кĕртесси, ĕç вăхăчĕпе туллин усă курасси тата ытти ыйту.

В.Егоров депутат хаçат-журналпа та туслă. Районти «Ял пурнăçĕ» тата республикăри «Хыпар» хаçатсем – унăн ĕç сĕтелĕ çинче.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**
Красноармейски районĕ.
Автор сăнÿкерчĕкĕ

ВУЛАКАН ШУХĂШĔ

# Чăх-хур тытасси тăкака ан çаврăнтăр

Ĕлĕк кил хуçи, кĕркунне çемье валли аш-какай пултăр тесе, пĕр-икĕ сысна усранă. Çак выльăхăн тăкакĕ нумай: чĕрĕ апата юратсах каймасть, пĕçернине ытларах килĕштерет. Çавна пула сысна усрасси ял çыннишĕн – чĕр нуша. Хальхи вăхăтра ялсенче хур, кăркка, чăх усрама пикенчĕç: урама кăларса яратăн та – хăйсемех тăранса пурăнаççĕ, каç еннелле киле таврăнаççĕ. Кĕр мăнтăрĕпе тăкак хакне шутласан, сыснапа танлаштарсан, чăх-чĕп ÿстерме йÿнĕрех те. Çавăнпах, тен, ялсенчи кашни çемьерех чăх, хур, кăркка 10-20 пуçран кая мар тытма пуçларĕç. Вĕсем, паллах, ăçта? Пурте урамра е пĕве хĕрринче. Каяшĕ ăçта? Каламасăрах уçăмлă – урамра. Шоркка ял старости Владимир Фомиряков ку ыйтăва пухусенче темиçе те çĕкленĕ, хур кĕтĕвĕ йĕркелесе ятарлă уйра черетлĕ çÿретме сĕннĕ. Ӳкĕте кĕртеймен. «Урамĕ санăн мар, эсĕ ăна укça парса илмен», – тесе хуравланă ял хуçине.

Хурсем алăк умне пырса вараланăшăн пускилсем харкашни те пулнă. Тĕслĕхрен, Октябрь урамĕнче пĕр чăх кÿршĕ пахчине кĕрсе сухан йăранне чаваласа тăкнăшăн лешсем тытăçсах илеççĕ, пĕр-пĕрне чăрмаласах пĕтереççĕ.

Ял тăрăхĕн администрацийĕсен ĕçченĕсен те халăха килти кайăк-кĕшĕке картара усрамалли пирки ăнлантармалла. Ытти муниципалитет ку ыйтупа тахçанах ĕçлет. Етĕрне райадминистрацийĕ çумĕнчи комисси октябрь уйăхĕнче, авă, Галина Буракована килти 30 чăхха тытмалли йĕркене пăснăшăн, право йĕркине пăхăнманшăн административлă майпа явап тыттарнă, пин тенкĕлĕх штрафланă. Тепĕр çул та, май уйăхĕнче, симĕс курăк шăтса тухсан, хăйĕн чăххисене урама каллех кăларса ярсан, ăна тепĕр пин тенкĕ штраф парса кĕсье тĕпне якатма пултараççĕ.

Кун пек чăх тытни сысна усрассин хакĕпе танлашать. Апла ан пултăрччĕ...

■ **Николай ПЛАТОНОВ.**
Шупашкар районĕ,
Шоркка ялĕ

**«Вырăнти хăй тытăмлăх» проект ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**
**Юрий СТЕПАНОВ хатĕрленĕ.** ● **Çырăр:** Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар». ● **Шăнкăравлăр:** /8352/ 28-85-01.

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Поэт, ăслăлăх çынни

**Эпир, çамрăксем, аслăрах ăрури пултарулăх çыннисенчен нумайăшне пĕлместпĕр. Мĕн ĕçлесе пурăннă вĕсем хăй вăхăтĕнче? Акă, тĕслĕхрен, кам-ха вăл Мĕтри Васлейĕ?**

**К.ДАНИЛОВА.**
Красноармейски районĕ.

Мĕтри Васлейĕ /псевдоним, чăн ячĕ – Василий Дмитриевич Дмитриев/. Красноармейски районĕнчи Çирĕклĕ ялĕнче 1906 çулта çуралнă. Поэт, прозаик, физиолог, биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Пысăк пултарулăхпа палăрса тăнă, нумай вĕреннĕ: Шупашкарти педагогика техникумĕнче, Н.К.Крупская ячĕллĕ Коммунизм воспитанийĕн академийĕнче, В.М.Бехтеров ячĕллĕ пуç мимине тата психика ĕç-хĕлне тĕпчекен институт аспирантуринче пĕлӳ илнĕ. Чылай вăхăт Ленинградра пурăннă.

1947-1950 çулсенче Мĕтри Васлейĕ – Ленинградра 1-мĕш мединститутра, 1950-1958 çулсенче Ленинградра педиатри медицина институтĕнче студентсене вĕрентнĕ. 1960-1964 çç. – Ленинградри радиаци гигиенин ăслăлăх тĕпчев институчĕн ăслăлăх аслă сотрудникĕ. Физиологипе гигиена ыйтăвĕсемпе 40 ытла ăслăлăх ĕçĕ пичетленĕ. Чăвашла сăвăсен, калавсемпе очерксен авторĕ. Пĕрремĕш сăвви «Канаш» хаçатра 1928 çулта кун çути курнă. «Пирĕн сас» сăвăсен пуххи, «Ыраш», «Ирĕклĕх» очерксем, «Пĕве» повеç тата ытти хайлав пичетленнĕ. «Çын ĕмĕрĕ вăрăм пултăр», «Çутçанталăка сыхласси тата сывлăх» кĕнекисем халăхра уйрăмах анлă сарăлнă.

Мĕтри Васлейĕ 1977 çулта Ленинградра вилнĕ.

## Пушкина юратса...

**Чăваш поэчĕсенчен камсем Александр Пушкин хайлавĕсене куçарнă?**

**В.МИТРОВАНОВ.**
Кӳкеç.

1860-1870 çулсенче Михаил Федоров А.С.Пушкинăн хайлавĕсене /«Сказка о рыбаке и рыбке», «Бесы»/ куçарма хăтланса пăхнă. Александр Сергеевич çырнисемпе хавхаланса кайса вăл «Арçури» поэма /1884/ çырнă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче Я.Турхан тата Х.Турхан аслă поэтăн лирика сăввисене куçарнă. И.Н.Юркин «Толчокра /Пушкин кĕлетки/» очеркра чăваш литературинче пуçласа çыравçăн илемлĕ сăнарне тунă.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Пушкинăн сăввисене Г.А.Кореньков, Н.В.Шупуççынни, поэмисене Г.Т.Тихонов-Калгай тата А.П.Милли куçарнă. «Нарспи» поэминче К.В.Иванов «Евгений Онегин» сăвăлла романăн стилĕпе ăнăçлă усă курнă. Ку хайлава 1930-1940 çулсенче Петĕр Хусанкай куçарнă.

В.Е.Митта /«Борис Годунов»/, И.Н.Ивник, А.Алка тата ыттисем те Пушкин пултарулăхне пысăка хурса хакланă, унăн сăввисене чăваш халăхĕ патне çитернĕ.

## Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи

**Çут тĕнчере упăтесене ĕçлетерме вĕрентнĕ тĕслĕхсем пур-и?**

**В.СЕРГЕЕВА.**
Комсомольски районĕ.

Индонезири пĕр провинцире влаçсем кокос мăйăрĕ пухнă çĕрте упăтесемпе усă курма шухăшланă. Провинцире 10 млн яхăн кокос пальми, унăн çимĕçне пухасси пачах та çăмăл мар. Çавăнпа та вырăнти çынсем йывăр тата сахал укça тӳлекен ĕçпе аппаланасшăн мар. Влаçсен ирĕксĕрех çак йывăрлăхран тухас пирки пуç ватма тивнĕ. Ку ĕçе упăтесене «кӳлме» йышăннă. Ятарласа вĕрентнĕ хыççăн йывăç çинчен йывăç çине сикме юратакан çăмăл та хăвăрт упăтесем кокос мăйăрне пухнă çĕрте çынсенчен те лайăххăрах ĕçлеме тытăннă.

## Çĕрулми... 80 кг таять!



**Чи пысăк çĕрулми миçе килограмм тайма пултарать?**

**Н.НЕВЕРОВ,**
Тăвай районĕ.

Бразилири Манаус хулинчи фермер хуçалăхĕнче халĕччен пулман çав тери пысăк çĕрулми çитĕннĕ. Вăл... 80 килограмм /!/ таять. Унран пĕчĕкреххисем те пур – 20-шер килограмлисем.

## Ылтăнран кĕпе çĕленĕ

**Ылтăнран çи-пуç та хатĕрлесе тăхăнаççĕ-им?**

**З.ЗВОНАРЕВА.**
Шупашкар хули.



Индири пир-авăр отраслĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывнă Панкай Парах 45 çул тултарнă май хăйне парне кӳме шухăшланă. Ылтăна çав тери юратакан бизнесмен килĕнчен 2-3 килограмм ылтăн эрешсĕр тухмасть. Хальхинче те пуçне ватсах кайман – чи таса ылтăнран кĕпе çĕлеме саккас панă. Кĕпене 20 ăста 2 уйăх таранччен хатĕрленĕ. Ылтăн тум виçи – 4 килограма яхăн, хакĕ – 200 пин ытла доллар. Панкай çирĕплетнĕ тăрăх – кĕпепе çӳреме питĕ лайăх, мĕншĕн тесен ылтăн сий айне пусма вырнаçтарнă. Ăна кĕпе çумалли машинăрах çума пулать. Бизнесмен журналистсене каласа кăтартнă тăрăх – ылтăн тумтире вăл халăх хушшинче çиçсе çӳреме кăна мар, рекордсен Гиннесс кĕнекине лекме те саккас парсах çĕлеттернĕ. Хăрушсăрлăх тĕллевĕпе магнат урамра хуралпа çеç çӳрет.

## Кролик усрас килет...

**Килти хуçалăхра кролик усрас терĕмĕр. Унăн ашĕ те çуллă мар, паха, çитĕнтерме те апачĕ нумай кирлĕ мар. Çак чĕр чун çинчен тĕплĕнрех пĕлесчĕ.**

**З.БАРЫГИНА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Кролик усрани нумай çыншăн чун киленĕçĕ вырăнĕнче.

Çак чĕрчун ашĕ диета апачĕ шутланать. Вăл ачасемшĕн, çире пур тата кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсемшĕн, çавăн пекех вархырăм чирĕсемпе аптракансемшĕн питех те усăллă. Консервласан, тĕтĕмлесен аш хăйĕн тутине, тутлăхлă паха енĕсене çухатмасть. Çын организмĕ кролик ашĕнчен 90% белок илет, ĕне ашĕнчен – 62% çеç.

Тир-сăран фабрикисенче кролик тирне ытти тискер чĕрчунăн, тĕслĕхрен, сăсар, шашкă тирĕ евĕрлĕ тăваççĕ. Кролик мамăкĕнчен арланă çипе тата унран çыхнă япаласене тĕрлĕ тĕспе сăрлама пулать.

Çитĕннĕ кроликсен пуш уйăхĕнче йăптăх тăкма пуçлаççĕ, хĕл валли çемçе те çăра сийĕ ноябрь уйăхĕ тĕлне çитĕнсе çитет.

Кроликсен ерекен хăш-пĕр чирĕ çынсемшĕн те хăрушă.

## Юрă уявĕнчен Акатуя çити

**Чăваш Енре юрă уявĕсене хăçан палла тума пуçланă?**

**Н.ЗИНОВЬЕВА.**
Тăвай районĕ.

Юрă уявĕсем – халăх хутшăнса ирттерекен пĕр кунлăх уявсем. Пирĕн республикăра вĕсене Акатуй уявĕн йăлисене никĕсе хурса 1953 çултанпа йĕркелеççĕ. Вĕсене ирттермешкĕн XX ĕмĕрти 30-40-мĕш çулсенчи искусствăсен /халăх пултарулăхĕн/ олимпиадисен, çавăн пекех Балтика тăрăхĕнчи республикăсенчи наци юрă уявĕсен тĕслĕхĕпе усă курнă. Унта та тĕп вырăнта нумай пинлĕ пĕрлештернĕ хор пулнă.

Каярах вĕсене ĕçпе юрă уявĕ тесе калама пуçланă. Совет таппхăрĕнче фольклортан пăрăннă, уява та политикăпа çыхăнтарнă. Çакна 3-мĕш уява – Шупашкар 400 çул тултарнине, 5-мĕшне – Октябрĕн 40 çулне, 7-мĕшне – КПСС XXI съездне, 9-мĕшне КПСС XXII съездне халаллани те çирĕплетнĕ.

Республикăри ĕçпе юрă уявĕсене унта хутшăнакансене малтанах ялсенчи, хуласенчи тата районсенчи ĕçпе юрă уявĕсенче суйласа илсе ирттереççĕ. Малтанах кашни çулах йĕркеленĕ.

1990 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Чăваш автономине туса хунăранпа 70 çул çитнĕ тĕле республикăри Акатуй уявне /çак ятпа/ пуçласа паллă тунă. Малалла ăна юбилейсене – Çĕнтерӳ кунне, Республика кунне – халалланă. Юлашки çулсенче ăна Республика кунне уявланă вăхăтра йĕркелеççĕ.




## Хурт-кăпшанкăран чи усăлли

**Çĕр çинче миçе тĕрлĕ хурт-кăпшанкă тата вĕсенчен хăшĕ чи усăлли?**

**В.СЕЛЮНИН.**
Элĕк районĕ.

Ăсчахсем çирĕплетнĕ тăрăх – çĕр çинче миллиона яхăн хурт-кăпшанкă шутланать. Вĕсенчен çыншăн чи усăлли – пыл хурчĕ. Вăл этеме тĕрлĕ чир-чĕртен сыватакан тутлăхлă пыл парать.

Пур халăх та пылăн сиплĕ енĕсене авалтанпах пĕлет. Халăх медицини çеç мар, хальхи ăслăлăх медицини те нумай чиртен сиплеме пылпа усă курать. Пĕр кашăк пыл пĕр тумлам сывлăх парать. Пыл çисен вăй кĕрет, организм чир-чĕртен хӳтĕленме пултарать. Яппунсем калашле, пыл – çутçанталăк çимĕçĕсен королĕ.

Пыл хурчĕсем ăвăс та тăваççĕ. Пыл шĕвĕ ылтăн тăк, ăвăс – ылтăн чăмакки. Ахальтен мар ĕнтĕ унпа ют патшалăхсемпе сутă тунă чухне укçа вырăнне усă курнă.



Ăвăспа радиоэлектроникăра, металлурги, тир-сăран, пир-авăр промышленноçĕнче, космонавтикăра, паха йышши хут тунă çĕрте усă кураççĕ.

Пыл хурчĕсем пухакан чечек тусанĕ, хурт амин сĕчĕ, пыл хурчĕн çилĕмĕ /прополис/ – çав тери усăллă çимĕçсем. Прополис сиенлĕ хăшпĕр микроба пĕтерме пултарать. Чечек тусанне юн сахаллипе аптрасан /малокровие/, вăй-хал чаксан çиме сĕнеççĕ.

**Кăларăма Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

ÇЫХĂНУСЕМ

# Чăваш Ен студенчĕсем китайла вĕренеççĕ

## И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра Аньхой культурин кунĕ иртрĕ

***Чăваш патшалăх университечĕ тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче вырнаçнă аслă шкулсемпе туслă çыхăну йĕркеленĕ. Беларуç, Казахстан, Германи, Итали тата ытти çĕршыври студентсемпе преподавательсем Чăваш Ене килсе кураççĕ, пирĕн ентешсем те вĕсем патĕнче хăнара пулаççĕ. Иртнĕ çул акă вĕренӳ учрежденийĕ Китайри Гуйчжоу университечĕпе килĕштерсе ĕçлемешкĕн ятарлă документа алă пусса çирĕплетнĕ. Çак кунсенче Шупашкара Китай Халăх Республикинчи Аньхой провинцийĕн делегацийĕ /пурĕ 14 çын/ килсе кайрĕ.***


Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Аслă шкулта сумлă хăнасене çăкăр-тăварпа, юрă-ташăпа кĕтсе илчĕç. Китай çыннисем малтанах И.Ульяновпа И.Яковлев музейне кĕрсе курчĕç. Унтан вĕсем преподавательсемпе тата студентсемпе тĕл пулчĕç. "Китайсем – ĕçчен те тăрăшуллă, ăслă та пултаруллă халăх. Вĕсене пĕтĕм тĕнче хисеплет, тĕслĕх илет. Раççей Президенчĕ Владимир Путин та сирĕн çĕршывпа ĕçлĕ çыхăну йĕркелесшĕн. Нумаях пулмасть вăл Китайра пулчĕ", – терĕ университет ректорĕ Андрей Александров. Чăн та, Китай Халăх Республики хăвăрт аталанакан çĕршыв, кашни отрасльте пысăк çитĕнӳсемпе палăрать. Тĕнче ăмăртăвĕсенче Китай спортсменĕсенчен маттуртараххи çук та пулĕ. Ламран лама куçакан йăла-йĕркене çирĕппĕн пăхăнса пурăнни культура вучахне сӳнме памасть. Хĕвелтухăç çĕршывĕн тĕпчевçисен идейисене пулах тĕнче экономики çултан-çул çĕнĕлĕхсемпе пуянланать. Чăваш патшалăх университечĕ мĕншĕн Аньхой провинцийĕпе туслă çыхăнусем йĕркелесшĕн-ха? Андрей Александров пĕлтернĕ тăрăх – унти вĕренӳ учрежденийĕсен тытăмĕ Чăваш Енри евĕрлĕрех иккен, инноваци технологийĕсем те вăйлă аталаннă ку тăрăхра, çавăнпа вĕсенчен вĕренмелли нумай. Китайри аслă шкулсем те пире ку енĕпе пулăшма хирĕç маррине палăртнă.

Чăваш патшалăх университечĕн представителĕсем кăçал хĕвелтухăç çĕршывне кайса курнине палăртмалла. Экономика факультечĕн студенткипе Екатерина Кузнецовăпа Эльвира Кузнецова доцентăн Аньхой университечĕ йĕркеленĕ çуллахи шкулта вĕренме тӳр килнĕ. Вĕсем унта чаплă музейсенче пулса курнă, Хуаньшань хули çав тери пысăк пулнинчен тĕлĕннĕ, Китай шурсухалĕсем ирттерекен ăсталăх сехечĕсенче кашни сăмаха ăша хывнă. "Паллах, ăслăлăхри çитĕнӳсем мухтава тивĕç, авалхи культурăн пуянлăхĕ чун-чĕрене тыткăнларĕ. Апата патакпа çиес йăлана та паянхи кунччен манаймастпăр", – хавхаланса калаçрĕç пикесем. Иртнĕ çул Китайра машиностроени факультечĕн студенчĕсем пулнă. Шанхай университетĕнче иртнĕ механизмсемпе машинăсен теорийĕн олимпиадинчен пирĕн ентешсем чи сумлă парнепе таврăннă: ют çĕршыв командисен йышĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра Китай чĕлхине вĕренекен йышлă. Ятарлă курса студентсем те, преподавательсем те çӳреççĕ. Тĕслĕхрен, психологи кафедрин пуçлăхĕ Евгений Николаев иккĕмĕш çул çак чĕлхене ăша хывать. Пухăннисене вăл Гуйчжоу университетне командировкăна кайса килни çинчен китайла каласа кăтартрĕ. Педагогика наукисен докторĕ Надежда Мерлина Китай ăсчахĕсемпе ĕçлĕ çыхăну тытас тĕллевлĕ. Профессор ăслăлăхпа меслет проекчĕсене пĕрле хатĕрлесе пурнăçлама сĕнчĕ. Хăнасем пирĕн ентешсен шухăшĕсене ырларĕç, малашне килĕштерсе ĕçлеме шантарчĕç.

Аньхой делегацийĕ вара пирĕн университетра ют çĕршыв студенчĕсен йышĕ пысăк пулнинчен тĕлĕннĕ. Хальхи вăхăтра кунта 37 çĕршыври 450 çамрăк пĕлӳ илет. Вĕренсе тухнисен шучĕ те пĕчĕк мар – 446. Вĕсем кунти яшкĕрĕмпе тата хĕр-упраçпа туслă пурăнаççĕ, ыттисем пекех пур мероприятие те хастар хутшăнаççĕ. "Мĕншĕн Чăваш Ен тăрăхне туртăннине кунта килсе курсан тин ăнлантăм. Сирĕн республикăра тарават çынсем пурăнаççĕ. Пире те питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç. Атăл хĕрринче вырнаçнă хула питĕ илемлĕ. Чăваш патшалăх университечĕ пире тĕнчери тĕрлĕ учрежденипе туслă çыхăну тытнипе кăмăла кайрĕ. Эпир те сирĕншĕн чи çывăх юлташ пуласса шанатăп", – терĕ Аньхой правительствин тĕп секретарĕн çумĕ Ву Син. Сăмах май, провинцире аслă 106 шкул, унта миллион ытла студент вĕренет.

Аньхой культурин кунне халалланă уяв акт залĕнче иртрĕ. Хăнасемпе студентсене Чăваш халăх артистки Августа Уляндина тата "Ярды" ансамбль юрă-ташăпа савăнтарчĕç. Аньхой университечĕн физкультурăпа çар вĕренĕвĕн пайĕн ассистенчĕ Ван Фэн хĕвелтухăç кĕрешĕвĕн мелĕсемпе паллаштарчĕ. "Кунфу – темиçе ĕмĕр каяллах çирĕпленнĕ çапăçу тĕсĕ. Ун никĕсĕ çинче каярах спорт тĕсĕсем вăй илнĕ. Кунфу çынна çутçанталăкпа килĕшӳре пурăнма, сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, çав вăхăтрах тĕрлĕ усал-тĕселтен хӳтĕленме пулăшать", – ăнлантарчĕ пике. Тĕлпулу программи ытти мероприятирен те пуян пулчĕ. Хăнасем анимаци хайлавĕсемпе илемлĕ фильмсем илсе килнĕ. Пирĕн ентешсем интерактивлă программăсемпе паллашрĕç, Китай урокĕсенче чĕлхе вăрттăнлăхĕсене шырарĕç. Тĕрлĕ лекципе калаçусенче те кăсăкли нумай пулчĕ. Хăнасем Шупашкарти паллă вырăнсене çитсе курнă. Аньхой çыннисем университетăн культура керменĕпе тата спорт комплексĕпе уйрăмах кăмăллă пулнă.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

# Тĕнче чемпионĕ чылай çĕршыва çитсе курнă

## "Хăвăрт чупать, çивĕч ăс-тăнлă, топографие лайăх пĕлет", – теççĕ ун пирки

***Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенче агрегат завочĕ республикăри чи вăйлă ориентировщиксемпе палăрса тăратчĕ. Анчах та чылайăшĕ Лапсарти чăх-чĕп фабрикине куçса кайнипе спортсменсен йышĕ сахалланса юлчĕ. Каярах спорт секцине заводра вăй хуракан Николай Павлов тепĕр хут чĕртсе тăратрĕ.***



Николай Иванович компаспа карттăна тытса чупассипе кăсăкланма иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче Шупашкарти агрегат заводĕнче ĕçлеме пуçласан тытăннă. Çав тапхăрта унта пултаруллă ориентировщик Леонид Никифоров ĕçленĕ. Вăл вĕрентнипех çамрăк спортсменсем пĕрремĕш утăмĕсене тунă, йышра Николай Иванович та пулнă. Спорт ориентировки спортăн чи йывăр тĕсĕсенчен пĕри пулни те шиклентермен ăна. Ара, хăвăрт чупас ăсталăхсăр пуçне спортсменăн топографие лайăх пĕлмелле тата çивĕч ăс-тăнлă пулмалла-çке.

Çак кунсенче сумлă юбилейне палăртнă ветеран 30 çул хушшинче пысăк çитĕнӳсем турĕ, вăл ертсе пыракан команда вун-вун ăмăртура палăрчĕ. 1984 çулта Николай Иванович республика чемпионĕн ятне пĕрремĕш хут тивĕçрĕ. Çав тапхăртанпа мĕнле çĕршыва çитсе курмарĕ, мĕнле ăмăртăва хутшăнмарĕ пулĕ. 1989 çулта Литвара иртнĕ СССР чемпионатĕнче спорт мастерĕн нормативне тултарнă ориентировщик иртнĕ вăхăта çапла аса илет: "Тӳрех малти рете тăма йывăртарахчĕ, малтан опыт та сахалрахчĕ. 1995 çулта Санкт-Петербургра иртнĕ çĕршыв кубокĕнче 11-мĕш вырăн йышăнтăм, тĕнче чемпионатĕнче /Литва, 2001/ çирĕм пĕрремĕш пултăм. Виççĕмĕш пысăк старт 2004 çулта Италире иртрĕ. Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнче эпĕ лайăх чупрăм, суйлав турнирĕнче йĕплĕ пралука çакланнипе кăтарту япăхрахчĕ. Çапах та икĕ кун пĕтĕмлетĕвĕпе финала тухрăм. Телее, унта мана ăнчĕ: Норвеги спортсменĕсене кая хăварса дистанцие пĕрремĕш вĕçлеме пултартăм, 50 çулсенчи ветерансен йышĕнче чемпион ятне тивĕçрĕм".

2011 çул та Николай Павловшăн чи телейлĕ çулталăк пулчĕ: Венгрире иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче вăл каллех пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарчĕ. Анчах ку ăмăртура çăмăлах пулмарĕ ăна: спортсменсен икĕ енлĕ турнирта вăй виçме тивнĕ. Пĕрремĕш старт – кĕске дистанци, тепри сăрт-туллă вăрманта иртнĕ. Унта вăл иккĕмĕш дистанцире уйрăмах палăрчĕ: финалта пирĕн ентеш тĕнчери чи паллă ориентировщиксемпе тупăшса "ылтăн" çĕнсе илчĕ. Çак çитĕнӳпех çырлахман спортсмен: 2012 çулхи чемпионатран та /ăмăрту Германире иртнĕ/ тăван тăрăха икĕ парнепе – ылтăн тата кĕмĕл медальсемпе – таврăннă.

Николай Павлов халĕ те тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнать. Тĕслĕхрен, кăçалхи çулла вăл Швецире иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери чи массăллă "О-Ринген" ăмăртура вăй виçсе Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командинчи спортсменсенчен чи лайăх кăтартупа палăрчĕ: 60 çулсенчи арçынсен ушкăнĕнче 15-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Кунсăр пуçне пирĕн ентеш хамăр республикăри спорт ориентировкине аталантармашкăн чылай ĕç тăвать: ăмăртусем валли карттăсем хатĕрлет, турнирсем ирттерет, çамрăксене вĕрентет. Сăмах май, унăн пиччĕшĕн ывăлĕ Олег Павлов та спортпа туслă. Чăваш Ен чемпионатĕнче пĕрре мар çĕнтернĕ, 2013 çулта Атăлçи округĕнче виççĕмĕш призер пулнă. Тетĕшĕ пекех заводра ĕçлекенскер кăçал ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ. Николай Ивановичăн мăшăрĕ Елизавета Михайлова та – ориентировка ăсти.

■ **Валерий ГАВРИЛОВ,**
**спорт ветеранĕ**


СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ ЦЕНТР
БЕТОН
РАСТВОР
ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

БЕТОН всех марок
(М-200 - 2800 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
доставка
тел.: 29-25-34, 29-24-88


## ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**513.Чистка колодцев.** Т. 8-961-342-90-59.

**688.Кровельные, фасадные работы.** Гарантия. Т. 89033220479.

**716.Окна, двери, мебель.** Т. 8-987-576-92-32.

**743.Доставка песка, грвмассы.** Т. 8-906-133-79-75.

**745.Проведение отопления, водоснабжения.** Т. 89871237797.

## ĔÇ РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**433.КОРОВ.** Т. 8-927-850-85-64.

**730.КРС** /коров, бычков и т. д./. Т.: 8-903-389-85-72, 8-906-130-91-84.

Администрация Канашского района информирует население о предстоящем предоставлении земельного участка площадью 40773 кв.м., с кадастровым номером 21:11:040601:387, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Кошноруйское.

Категория земель - земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование - для сельскохозяйственного производства. Срок аренды - 49 лет.

Желающим приобрести вышеуказанный земельный участок обращаться с заявлением в администрацию Канашского района по адресу: г. Канаш, ул. 30 лет Победы, 87, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 8 (83533)2-84-80.

## Ĕçе илетпĕр

**«Хыпар» Издательство çурчĕ ЭВМ калăплав операторне ĕçе илмешкĕн конкурс иртерет. Унта Adobe InDesign, Page Maker, Photoshop, Corel Draw программăсемпе ĕçлеме ăста, чăвашла лайăх пĕлекен çынсем хутшăнма пултараççĕ.**

**Документсене çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар, И.Яковлев проспекчĕ, 13, 3-мĕш хут, 312-мĕш пӳлĕм.**

**Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 56-00-67, 62-08-62.**


РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07


## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 8-967-470-46-77.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит. Д-ка. Т.: 8-903-358-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич, кольца.** Т. 8-961-339-33-63.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер, доставка – бесплатно. **Т. 8-937-010-10-54.**

**24.Грабли, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**30.ОКНА** от 4200 р.; **ДВЕРИ** стальные от 8900 р. Акция действует до конца месяца. Звоните по тел. 8-937-954-92-45.

**33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 89876664140, 89370100141.

**48.Керамблоки; все для фундамента** – ФБС, бой кирпича, бетона, сваи, ОПГС, песок. Доставка. Т. 8-906-381-44-20.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 8-937-391-60-16.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 8-937-952-84-67,** Владимир.

**79.ПРИЦЕПЫ** для минитрактора, мотоблока. Т. 89053444735.

**128.Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**685.ТРОТУАРНУЮ ПЛИТКУ, брусчатку** – дёшево. Распродажа. Доставка. Укладка. Т. 89033220479.

**686.Песок, щебень, гравмассу; вывоз** мусора. Т. 89033220479.

**687.Профнастил, металлочерепицу, водостоки.** Скидки. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**736.Кольца колодезные** – 0,7; 1,0; 1,5. Доставка. Т.: 8-903-379-77-68, 36-26-23.

**753.ПИЛОМАТЕРИАЛ** от производителя; утеплители, крепежные изд. Гидропароизоляция. НДС. Т.: 37-69-01, 44-04-47.

**754.Кормовые добавки:** патоку, жмых, шрот, мел, соль. Доставка. Тел. 8-903-345-05-72.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ библиотека ертӳçин М.И.Бакинан ывăлĕ

**САВЕЛИЙ**

йывăр чире пула пит пĕчĕклех пурнăçран уйрăлнă пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Тӳсĕмлĕх, шалти хăват тата çирĕплĕх сунатпăр, хисеплĕ Маргарита Ильинична, Сире тата сирĕн çемйĕре.


САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"
УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!
Санаторий «Надежда» желает Вам здоровья, долголетия и приглашает на ЗИМНИЕ СКИДКИ.
Только с 1 декабря по 31 декабря 2014 г. стоимость санаторно-курортной путевки –
10 дней ~~18000 руб.,~~ 16500 руб.
К ВАШИМ УСЛУГАМ: ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.
Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.
Спешите, количество мест ограничено!
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ
Лицензия ЛО-21-01-001130 от 05.08.2014 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики


## Саламлатпăр



*Тӳрĕ кăмăллă та ырă чунчĕреллĕ çыннăмăра, юратнă вĕрентекене – Тăвай районĕнчи Йăнтăрччă шкулĕнче ĕçлекен Надежда Генриховна НИКОЛАЕВĂНА – 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Надежда Генриховна, эсир пире, вĕренекенсене, яланах ăнланнă, юратнă, пулăшса пынă. Эпир сирĕн ĕçченлĕхĕрпе, иксĕлми тăрăшулăхăрпа хавхаланатпăр, сире чун-чĕререн тав тăватпăр. Кĕрекĕр сирĕн çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, сывлăхăр – çирĕп, ĕмĕрĕр вăрăм пултăр.*

*Саламлакансем – шкултан 2008, 2009, 2013 çç. вĕренсе тухнисем.*

Организатор торгов - конкурсный управляющий **Общества с ограниченной ответственностью "Индустриально-строительный комбинат"** (429950, Чувашская республика-Чувашия, г. Новочебоксарск, ул. Промышленная, 73 **ИНН:** 2129060730, **ОГНР:1062128180641)** Ваньев Игорь Иванович (ИНН: 2129060730, СНИЛС: 003-361-757-10, **почтовый адрес:428017,** Чувашская республика-Чувашия, г. Чебоксары, п/о №17, **а/я №5, e-mail: vanyev@mail.ru, телефон:** +7(8352) 63-15-97), член НП "СОАУ "Меркурий" (127018, Москва, ул.2-я Ямская, д.2 офис 201; ОГРН: 1037710023108; ИНН: 7710458616), действующий на основании Определения Арбитражного суда Чувашской Республики-Чувашии от 11.11.11 г. по делу №А79-4759/2009, сообщает, что 14.11.2014 г. в 17:00 на электронной торговой площадке www.atctrade.ru состоялось подведение итогов повторных торгов в электронной форме по продаже имущества - ООО "ИСК", торги по лоту № 1 на электронной торговой площадке ООО "Аукционный тендерный центр" (адрес в сети интернет www.atctrade.ru) признаны несостоявшимися в связи с отсутствием заявок на участие в торгах. Также организатор торгов сообщает о проведении в электронной форме продажи посредством публичного предложения имущества вышеуказанного должника (далее - Продажа). Предметом торгов является следующее имущество ООО "ИСК": **Лот №1:** Дебиторская задолженность (права требования) общества с ограниченной ответственностью "Индустриально-строительный комбинат" к обществу с ограниченной ответственностью "СУОР" (ИНН 2127311917). Начальная цена продажи Лота №1: 12 649 500 руб. (без учета НДС). Полный список имущества, входящего в состав лотов опубликован на сайте электронной площадки "Аукционный тендерный центр" (по адресу в сети Интернет: www.atctrade.ru.), а также размещен на официальном сайте Единого федерального реестра сведений о банкротстве (по адресу в сети Интернет: www.fedresurs.ru). Для участия в аукционе претенденты представляют заявки оператору электронной площадки по адресу: www.atctrade.ru. Дата начала приема заявок и предложений по цене имущества - 22.12.2014 г. с 11.00 по московскому времени. При отсутствии в установленный срок заявки на участие в Продаже, содержащей предложение о цене имущества, которая не ниже действующей в соответствующий период цены продажи имущества, снижение цены продажи осуществляется в сроки, указанные в настоящем сообщении. Начало каждого периода - 11.00 по московскому времени.

Лот №1

| № период снижения | Периоды снижения цены лота | Цена лота (руб., без учета НДС |
|---|---|---|
| 1. | 22.12.2014 | 12 649 500 |
| 2. | 23.12.2014 | 8 854 650 |
| 3. | 24.12.2014 | 5 059 800 |
| 4. | 25.12.2014 | 1 264 950 |

Для участия в аукционе претендент вносит задаток в размере 5% от начальной стоимости лота. Подписанный ЭЦП заявителя договор о задатке представляется оператору электронной площадки в электронной форме. Заявитель вправе направить задаток на указанный счет без представления подписанного договора о задатке. Реквизиты для перечисления задатка: р/сч №40702810311000000438 в Чувашском РФ ОАО "Россельхозбанк" г. Чебоксары, кор.счёт 30101810600000000752, БИК 049706752, получатель - Общество с ограниченной ответственностью "Индустриально-строительный комбинат" (ИНН 2129060730, КПП 212401001). Сумма задатка считается внесенной с момента зачисления полной суммы задатка на указанный расчетный счет ООО "ИСК" до момента предоставления заявки оператору электронной площадки.

Заявка должна содержать сведения, предусмотренные ст. 110 ФЗ "О несостоятельности (банкротстве)" и Приказом МЭР РФ от 15.02.2010 г. №54. К заявке на участие в торгах должны прилагаться следующие документы: обязательство участника открытых торгов соблюдать требования, указанные в сообщении о проведении открытых торгов; действительная на день представления заявки на участия в торгах выписка из Единого государственного реестра юридических лиц или засвидетельствованная в нотариальном порядке копия такой выписки (для юридического лица), действительная на день представления заявки на участие в торгах выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей или засвидетельствованная в нотариальном порядке копия такой выписки (для индивидуального предпринимателя), копии документов, удостоверяющих личность (для физического лица), надлежащим образом заверенный перевод на русский язык документов о государственной регистрации юридического лица или государственной регистрации физического лица в качестве индивидуального предпринимателя в соответствии с законодательством соответствующего государства (для иностранного лица); документы, подтверждающие полномочия руководителя юридического лица, имеющего право без доверенности действовать от имени юридического лица; копию решения об одобрении или о совершении крупной сделки, если требование о необходимости наличия такого решения для совершения крупной сделки установлено законодательством РФ и (или) учредительными документами юридического лица и если для участника открытых торгов приобретение имущества или внесение денежных средств в качестве задатка являются крупной сделкой; доверенность на лицо, уполномоченное действовать от имени заявителя при подаче заявки. Документы, прилагаемые к заявке, предоставляются в форме электронных документов, подписанных электронной цифровой подписью заявителя.

Предложения о цене заявляются открыто, в ходе торгов на электронной площадке в соответствии с ее регламентом. Победителем Продажи признается участник, который первым представил в установленный срок заявку на участие в Продаже и прилагаемые к ней документы, соответствующие требованиям, установленным в настоящем сообщении, содержащую предложение о цене лота, которая не ниже начальной цены лота, установленной для определенного периода снижения цены, а также перечисливший задаток в установленном в настоящем сообщении порядке и сроки. С даты определения победителя Продажи (протокол размещается на ЭП), прием заявок прекращается.

Результаты Продажи подводятся по адресу: 428000, Чувашская республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Текстильщиков, д.10, оф.331, а также размещаются на электронной площадке. В течение 5 дней с даты подписания протокола о результатах проведения торгов победителю торгов направляется предложение заключить договор купли-продажи имущества с приложением проекта данного договора. В случае отказа или уклонения победителя торгов от подписания договора купли-продажи в течение 5 дней со дня получения предложения о заключении такого договора он теряет право на приобретение данного имущества без дополнительного его уведомления, внесенный задаток ему не возвращается. Ознакомиться со сведениями об имуществе, условиями участия в аукционе, положением о порядке проведения торгов, с существенными условиями договора купли-продажи, иными сведениями можно на сайте в сети Интернет по адресу: www.atctrade.ru или по адресу: 428000, Чувашская республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Текстильщиков, д.10, оф.331, понедельник - пятница, с 10 ч. 00 мин. до 15 ч. 00 мин. Телефон для справок: 8 (8352) 63-15-97. Время по тексту - московское.

# Ҫамрӑксен туслӑхӗ ҫирӗп

***И.Н.Ульянов ячӗллӗ ЧПУн А.А.Кокель ячӗллӗ Ӳнер музейӗнче В.И.Суриков ячӗллӗ Мускав патшалӑх университечӗн ӳнер институчӗн Хусанти филиалӗн студенчӗсен ӗҫӗсен куравӗ уҫӑлчӗ.***

Картинӑсене паллӑ художник ҫуралса ӳснӗ Патӑрьел районӗнчи Турхан ялӗнче иртнӗ Кокель пленэрӗнче ӳкернӗ. Пурӗ – 42 ӗҫ. Тӗнче шайӗнчи ҫак пленэр, Украинӑн тава тивӗҫлӗ художникӗ А.Чередниченко каланӑ тӑрӑх – Чӑваш Енӗн сӑнарлӑ искусствин сӑнсӑпатне туллин уҫса парать.

Студентсем пурнӑҫӗнчи пӗлтерӗшлӗ пӗрремӗш курава чӑвашсен профессионал искусствине никӗсленӗ Алексей Кокеле халалланӑ. Сӑрӑ ӑстисен вӗрентекенӗ, Раҫҫей Федерацийӗн тата Тутар Республикин тава тивӗҫлӗ художникӗ З.Шмаев ҫамрӑксен ӑсталӑхӗ пленэр кунӗсенче самаях ӳснине палӑртать.



Вернисаж вӑхӑтӗнче И.Н.Ульянов ячӗллӗ ЧПУ тата ҫӗршыври паллӑ ӳнер шкулӗн филиалӗ малашне тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме килӗшсе татӑлчӗҫ. Халӑхсен пӗрлӗхӗн уявне паллӑ тунӑ кунсенче уҫӑлнӑ курав Чӑваш Ен тата Тутарстан, нумай нациллӗ Раҫҫей ҫамрӑкӗсен туслӑхӗ ҫирӗппине кӑтартса пачӗ.

■ **В.ВАСИЛЬЕВ.**
**культурологи докторӗ, профессор**

# Ӑсчахсемпе кӗнекеҫӗсен пӗрлехи «ҫимӗҫӗ»

***Чӑваш халӑхне ҫутта кӑларакан Иван Яковлев искусствӑн чылай енӗпе ӗҫлекенӗсене хавхалантарнӑ, халӗ те хавхалантарать. Поэтсем сӑвӑ хыҫҫӑн сӑвӑ шӑрҫалаҫҫӗ, музыкантсем кӗвӗ хываҫҫӗ, сцена ӑстисем спектакльсем кӑлараҫҫӗ...***

Ҫак кунсенче кун ҫути курнӑ «И.Я.Яковлев в изобразительном искусстве» кӗнеке-альбом вара Патриарха ӳнер искусстви мелӗпе уҫса парать. Авторӗ – Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн ӗҫченӗ, искусствоведени кандидачӗ Юрий Викторов профессор.

Юрий Васильевичӑн ку енӗпе ӑсталӑхӗ питӗ пысӑк. Вӑл 100 ытла статьяпа ӑслӑлӑх ӗҫӗн авторӗ. Вӗсенчен пысӑк пайне профессионал ӳнер искусствине, паллӑ художниксен пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тӗпчессине халалланӑ. Паллӑ ӗҫӗсен шутӗнче ҫаксем: «Петр Кипарисов: художник-педагог», «Анатолий Бриндин: скульптор-монументалист», «Федор Осипов. Жизнь и творчество» тата ытти те.

Ҫӗнӗ кӑларӑм – Чӑваш кӗнеке издательствипе Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн пӗрлехи «ҫимӗҫӗ». Автор палӑртнӑ тӑрӑх – кӗнекере Иван Яковлев сӑнарне живопиҫ, графика, скульптура произведенийӗсенче мӗнле ҫутатнине пуҫласа туллин уҫса панӑ. Альбом иллюстрацисемпе пуян. Кунта вӗрентӳҫӗ пурӑннӑ вӑхӑтрах пурнӑҫланӑ портретсем, ун хыҫҫӑнхи тата паянхи ӑрури ӳнерҫӗсен ӗҫӗсем вырнаҫнӑ. Вӗсене тишкернӗ май автор ӳнерти яковлевиана мӗнле аталаннине тивӗҫлӗ хак парать. Юрий Викторов Чӑваш наци музейӗн, Чӑваш патшалӑх ӳнер музейӗн, И.Я.Яковлев патшалӑх музейӗн




тата ыттисен ӗҫченӗсене, Яковлев пурнӑҫӗпе ӗҫ-хӗлне тӗпчекен Н.Г.Краснова Ҫутта кӑларуҫӑпа ҫыхӑннӑ произведенисемпе тивӗҫтернӗшӗн тав тӑвать.

■ **Н.ГЕОРГИЕВА**

# «Кӗмӗл ӗмӗрте» – кӗрхи курав

***Наци библиотекин «Кӗмӗл ӗмӗр» галерейинче Чӑваш художникӗсен союзӗн кӗрхи куравӗ уҫӑлнӑ. Унта Ильинкӑра иртнӗ ҫуллахи пленэрта ӳкернӗ ӗҫсене тӑратнӑ.***



Асӑннӑ союзӑн куравне пӗрремӗш хут хутшӑнакансем те пур. Сӑмахран, Тутарстанри Аксу районӗнче ҫуралса ӳснӗ, халӗ Ҫӗнӗ Шупашкарта пурӑнакан Виктор Артемьевӑн 15 живописҫне асӑнмалла. Маларах унӑн ятарлӑ куравӗ Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институтӗнче тата Ҫӗнӗ Шупашкарти ӳнер музейӗнче иртнӗччӗ.

Ноябрь уйӑхӗнче союз членӗ Виталий Яковлев 65 ҫул тултарнӑ. Экспозицин пысӑк пайне унӑн живопиҫ произведенийӗсем йышӑнаҫҫӗ.

Вернисажра выставка кураторӗ Лариса Скворцова, Чӑваш художникӗсен союзӗн правленийӗн председателӗ, ЧР Патшалӑх премийӗн лауреачӗ, ЧР тава тивӗҫлӗ художникӗ Валентин Федоров, ЧР тава тивӗҫлӗ художникӗ Геннадий Дубровин, искусствоведени кандидачӗ Юрий Викторов, Михаил Воробьев культуролог тата искусствовед, ыттисем сӑмах каланӑ. Уява яланхи пекех юрӑҫсемпе музыкантсем илем кӳнӗ.

■ **Тимӗр АКТАШ.**
Автор сӑнӳкерчӗкӗ

# Театрсен ҫитес эрнери – ноябрь, 24-30 – репертуарӗ

## *К.В.Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗ*



**25.** «Килех килчӗ тур ҫырни» камит.
**26.** «Синкерлӗ шӑпа» драма.
**28.** «Чикагӑри асатте пурлӑхӗ» камит.
**29.** «Вӗҫсе иртеҫҫӗ кайӑксем» мелодрама.
**30.** «Юратупа кавӑн» камит.
**Спектакльсем 18.30 сехетре пуҫланаҫҫӗ.**



## *Чӑваш патшалӑх пукане театрӗ*

**27.** «Атя, тилӗ, яра пар!» юмах /12.00/.

# Юбилейсем

**Ноябрь, 25**

◆ РФ культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, РФ Журналистсен союзӗн премийӗн лауреачӗ **Василий Петров** ҫыравҫӑ /Ҫӗрпӳ районӗ, Энӗшкасси/ **75 ҫул** тултарать.

**Ноябрь, 26**

◆ **100 ҫул** каялла тӗрӗ ӑсти, РФ тава тивӗҫлӗ ӳнерҫи, Чӑваш халӑх художникӗ **Екатерина Ефремова** /1914-2000/ ҫуралнӑ.



◆ Чӑваш ҫыравҫи, СССР Писательсен союзӗн членӗ **Николай Шупуҫҫынни /Васильев/** ҫуралнӑранпа – **125 ҫул** /сӑнӳкерчӗкре/.

**Ноябрь, 27**

◆ РФ тава тивӗҫлӗ архитекторӗ, ЧР хула строительствипе общество инфратытӑм аталанӑвӗн министрӗнче ӗҫленӗ **Владимир Филатов 75 ҫулхи** юбилейне уявлать.

◆ **5 ҫул** каялла ҫамрӑксен **«Хастар» общество организацийӗ** йӗркеленнӗ /ертӳҫи – Татьяна Николаева/.

**Ноябрь, 28**

◆ ЧР ял хуҫалӑхӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ **Николай Храмов** /Вӑрнар районӗ, Кульцав/ ҫуралнӑранпа – **80 ҫул.**

◆ ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ **Николай Порфирьев 60 ҫул** тултарать.

◆ **110 ҫул** каялла Совет Союзӗн Геройӗ **Николай Иванов** /Елчӗк районӗ, Кӗҫӗн Елчӗк/ ҫуралнӑ.

**Ноябрь, 29**

◆ РФ тава тивӗҫлӗ строителӗ, «Дорисс» пӗрлешӳ ертӳҫи **Игорь Рощин – 70 ҫул.**

# Паллӑ кунсем

**Ноябрь, 24**

■ **Хӗветӗр кунӗ.** Ҫак кун хӗллехи ҫилсем килеҫҫӗ, ҫавӑнпа ҫанталӑк сивӗтет тенӗ ваттисем. Тӳпере ҫӑлтӑр нумай тӑк тепӗр ҫул ҫырлапа кӑмпа йышлӑ пулать. Викентий, Виктор, Евгений, Максим, Степан, Федор хӑйсен менелникне уявлаҫҫӗ.

**Ноябрь, 25**

■ **Иван кунӗ.** Ӗлӗк ҫак кун туй эрнисем вӗҫленнӗ. Юр ҫуман тӑк урама тухма хушмаҫҫӗ. Панулми кунӗ пулнӑран ҫак ҫимӗҫрен тӗрлӗ апат хатӗрлемелле. Менелник «хуҫисем»: Дмитрий, Александр, Афанасий, Борис, Владимир, Карина, Константин, Лев, Степан.

**Ноябрь, 26**

■ **Пӗтӗм тӗнчери информаци кунӗ.**

■ **Иван кунӗ.** Ҫак кунран пур япала та ӳсме пӑрахать теҫҫӗ. Ҫӗнӗ тырпултан хатӗрленӗ ҫӑнӑхран пельмень пӗҫерсе ҫимелле. Асар-писер ҫанталӑкпа ҫил-тӑмана йыхравлакан тапхӑр. Иванпа Германшӑн чи лайӑх кун.

**Ноябрь, 27**

■ **Тинӗс-ҫар пехотин кунӗ.**

■ **Хӗлип кунӗ.** Ӗлӗкхи хӗрарӑмсем ҫак кунран пуҫласа пӗрле пухӑнса ҫӑм арлама, пир тӗртме тытӑннӑ. Выльӑх-чӗрлӗхе сыхлакан хӗрт-сурта апат-ҫимӗҫпе «хӑналама» хушнӑ. Тӗтре тӗк тепӗр ҫул сӗлӗ лайӑх пулать, ҫумӑр тӑк – тулӑ.

**Ноябрь, 28**

■ **Гурий кунӗ.** Шӑла сиплемелли кун теҫҫӗ. Юр ҫусан – ҫуркуннеччене хӗл ларасса. Чӑхпа кӑмпаран хатӗрленӗ апат-ҫимӗҫ тутанмалла. Менелник «хуҫисем»: Самсон, Варвара, Григорий, Дмитрий, Никита, Николай, Петр.

**Ноябрь, 29**

■ **Матви кунӗ.** Ҫак кун ҫил-тӑман тӑк Микулачченех ҫакнашкал пулӗ. Ҫил-тӑманра усал чир-чӗр ҫыпӑҫать тенӗ ӗлӗк, ҫавӑнпа урамра ҫӳреме, ҫула тухма хушман. Менелникне Федор, Василий, Дмитрий, Иван, Матвей, Михаил, Семен, Сергей паллӑ тӑваҫҫӗ.

**Ноябрь, 30**

■ **Анне кунӗ.**

■ **Кӗркури кунӗ.** Ҫак кун хӗлле епле пуласине пӗлнӗ. Пӑр хура тӑк тепӗр ҫул тыр-пул ӑнса пулӗ. Менелникҫӗсем: Геннадий, Захар, Иван.

## Ҫанталӑк

кӑнтӑрла ҫӗрле

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 22.11 | – | 3 | – | 4 | |
| 23.11 | – | 2 | – | 10 | |
| 24.11 | – | 7 | – | 12 | |
| 25.11 | – | 4 | – | 8 | |
| 26.11 | – | 5 | – | 9 | |
| 27.11 | – | 4 | – | 9 | |
| 28.11 | – | 4 | – | 8 | |



чӑваш халӑх хаҫачӗ
ХЫПАР

Учредительсем: Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ, Чӑваш Республикин Информаци политики тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство ҫурчӗ" Чӑваш Республикин хӑй тытӑмлӑ учрежденийӗ

Федерацин ҫыхӑну, информаци технологийӗсен тата массӑллӑ коммуникацисен сферинчи надзор службин Чӑваш Республикинчи управленийӗнче 2013 ҫулхи май уйӑхӗн 31-мӗшӗнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленӗ

"Хыпар" индексӗ – 54800, "Хыпар"-шӑматкун"– 78353

Директор-тӗп редактор
В.В.ТУРКАЙ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тӗп редактор заместителӗ-коммерци директорӗ/
Г.А.МАКСИМОВ /тӗп редактор заместителӗ/
С.Л.ПАВЛОВ /тӗп редактор заместителӗ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурӑпа чӑваш диаспорин пайӗн редакторӗ/
В.В.ТУРКАЙ /директор-тӗп редактор/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплӑ секретарь-техника центрӗн пуҫлӑхӗ/

Дежурнӑй редактор Н.Д.КОНОВАЛОВ

Редакципе издатель адресӗ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧӖ, 13, ПИЧЕТ ҪУРЧӖ, III ХУТ, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонӗсем:
56-00-67 – директор-тӗп редактор
56-33-64 – тӗп редактор заместителӗ
56-04-17 – тӗп редактор заместителӗ
62-08-62 – секретариат, яваплӑ секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнӑҫӗпе политика пайӗ
56-05-21 – журналист тӗпчевӗсен тата куҫару пайӗ
56-08-62 – экономика пайӗ
56-03-04, 28-85-91 – социаллӑ пурнӑҫпа вӗренӳ пайӗ
56-08-61 – культурӑпа чӑваш диаспорин пайӗ
56-04-26, 28-82-91 – хроникӑпа хамӑр корреспондентсен пайӗ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийӗ,
28-83-70 – рекламӑпа пӗлтерӳсен пайӗ
56-20-07 – ҫырӑнтарупа реализаци пайӗ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчӗ:
Йӗпреҫ – /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95
28-85-71 – Чӑваш Республикин Журналистсен союзӗн правленийӗ

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаҫата «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» АУ техника центрӗнче калӑпланӑ, «Чӑваш Ен» ИПК» АУО типографийӗнче пичетленӗ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчӗ,13. 56-00-23 – издательство директорӗ.

РЕКЛАМӐПА ПӖЛТЕРӲСЕНЕ 316-мӗш пӳлӗмре йышӑнаҫҫӗ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечӗ. Калӑпӑшӗ 2 пичет листи. Рекламӑпа пӗлтерӳсен чӑнлӑхӗшӗн вӗсене паракансем яваплӑ.

Хаҫатри рекламӑсӑр тӳлевлӗ информаци материалӗсем "Реклама ҫинчен" федераци саккунӗн 2 ст. килӗшӳллӗн **"Аталану ҫулӗпе", "Ят-сум", "Ӗҫ тата ҫын", "Самана таппи", "Компетентлӑ"** рубрикӑсенче пичетленеҫҫӗ.

Номере 21.11.2014 алӑ пуснӑ.
Пичете графикпа 21 сехетре алӑ пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алӑ пуснӑ.

Тираж 8595. Заказ 4494.

Ӗҫ кунӗ 8 сехет те 45 минутран пуҫласа 17 сехет те 45 минутчен, шӑматкунпа вырсарникунсӑр пуҫне.